24-9

Г. Гарин (Михайловский)

# ҪАРПИКЕ

(Вăйă калавĕ)

ЙУМАН М. куçарнă

ЂĂВАШ ОПЛĂÇĔНЂИ КĔНЕКЕ КĂЛАРАКАН УЙРĂМ.
Шупашкар 1924.

Н. Г. Гарин (Михайловский)

# САРПИКЕ

(Вăйă калавĕ)

ЙУМАН М. куçарнă

ҪĂВАШ ОПЛĂÇĔНҪИ КĔНЕКЕ КĂЛАРАКАН УЙРĂМ.
Шупашкар 1924.

Чувашоблит № 640.     Печ. 3.000 экз.

г. Чебоксары, Типография Чувашиздата.

# Куçараканран.

Вырăс çырулăхĕнђе, ытларах та илемлĕ çырулă хĕнђе, ђăваш йађĕ сайра пĕрре кăна тухкалат. Раççейре ĕлĕк ђăваш халăхĕ пурăнни-пурăнманни пĕртте сисĕнмен. Вăл пурăнăç тăвакан халăх, хăй ирĕкĕпе, хăй вăйхăвађĕпе пурăнакан халăх пулман. Патшалăхра вăл уйрăм пусмăрта пурăнакан йăх вырăнне çеç хисепленнĕ.

Раççейре патшалăх пурлăхĕ аслăланса пынă, кăпитталисăма пула мул ђăмăртаннă, куђттурă сарăлса аталанса пынă. Раççейре ăслăлăх, çырулăх, илемĕш, техникă ӳснĕçем ӳснĕ. Хастарлă, актив ĕ классем-сисем: пуршуаçи, пролеттариат аталанса çитĕннĕ. Авалхи тĕнђе хуçисем: улпутсен сийĕ, ђиркӳ, патша тарçи пӳрокрађĕ пурăнăç тыткине алăран ĕçересшĕн мар тапăçнă. Вĕсен те хăйсен шăвăç пек йакалнă—кивелнĕ куђттурă пулнă, çапах та, вăл та куђттурах пулнă. Хуласенђе мешђен куђттурĕ, кăвакарнă-пăнтăхнă куђттурă пулнă, анђах çапах та вăл куђттурах пулнă теме кирлĕ. Ђăвашсен мĕн пулнă? Ђăваш халăхĕ кам пулнă?

Нимĕн те пулман, вăл никам та пулманах тесен те ытлашши пулмĕ. Ђăваш халăхĕ патшалăх пурăнăçĕнђе ура айĕнђи тăпра пулнă. Вăл вырăс куђттурне

сёткен паракан тирёс-навус кăна пулнă. Вăл пурăнăç урапине туртса пыракан лаша пулнă... Кам, мёнле ăслăлăхçă, мёнле çыруçă ăна асăнтăр?

Пирĕн умра тинёс пек пысăк, вёçёмсёр вырăс литтераттурё. Çивђё, хăватлă, хёрÿлё çырулăх. Тёпсёр тарăн, вёççёр çÿлё литтераттурă... Çунатлă, ђеђеклё вырăс поеçийё... Анђах ăçта-ши ђăваша пёр сăмахпа та пулин асăнни? Сахалах та марçке ђăваш çемйи. Епир мёђйун та виççёр пин етем. Раççейре çёр çынран пёри ђăваш. Ах, çырура çёр сăмахран пёрне ђăваш çинђен калана пулинђђё!..

Ытларах та ђăваш поеçипе илемлё литтераттурăра нихçан та асăнмасă.

Паллăрах писаттёлсенђен ђăвашсене Л. Н. Толстой, Н. Г. Гарин, Телешов, хађхи çыруçă О. Миртов çеç ђунтанах асăнса илеççё. Анђах вёсем те Телешовпа Гаринран пуçне ђăвашсене сăмах хушшинђе кăна асăнкалаççё. Телешов „сухая беда" йатлă калавёнђе тёп керой вырăнне кăтартаă—çав калавра вăл авалхи йёркепе пурăнакан ђăваш хула пурăнăçне, йут пурăнăça хăнăхаймасăр пётнине кăтартаă. Çак калавăн тёллевё, увăн сотсиаллă сÿрети, унăн ђăваш пытне сăнакан халё çителёклё пысăк. Анђах ун çинђен сăмаха тăсма кунта пирён вырăн çук—ун çинђен калаçма уйрăм тивёçлё, çав кёнекене ђăвашла куçарса пиђетлесен çеç

калаҫма та пултарӑпӑр епир. Вырӑс литтераттурӗн тӗп кӗрешӗ Л. Н. Толстой ԏӑваша кӑшт ҫеҫ асӑнса илет. Анԏах ӑна уншӑн та тав. Акӑ „Ԏӗрӗлу“ тенӗ калав. Хресԏен пусмӑр сӑнԏӑрне ывӑтнӑ-ывӑтман самана. Куԓттурӑ тӑварӗ витӗр витнӗ ҫӳлти сирен „ӳкӗнекен улпуггсем“ хыпаланса уйӑрӑлаҫҫӗ. Халӑх ӗнси ҫинԏе пурӑнни вӗсене пӗтӗмпех йӑлӑхтарнӑ. Ҫын терԏӗ-асапӗпе телей тӑвасси вӗсене тӑрантарнӑ. Вӗсем „ӳкӗнеҫҫӗ“... Вӗсенԏен хӑшӗ патшасем ҫине алӑ ҫӗклесе те ешафот ҫине мӑнтарӑн пуҫӗсене хураҫҫӗ, вӗсем Ҫипирте, тӗрмесенԏе, катӑркӑра сывлхӗсене ҫисе ҫухалаҫҫӗ... Вӗсем хисепсӗр нумай кунӗн-ҫӗрӗн, темиҫе ӗмӗр тӑрӑшшӗпе, ԏӑваш ҫӗршывӗ урлӑ, хурӑнлӑ ҫул тӑрӑх, Хусанпа Ԏулхула хушшинԏи аслӑ ҫул тӑрӑх иртеҫҫӗ... Вӗсен пуҫӗнԏе халӑха телей сунакан шухӑш, ԏӗринԏе хура халӑха ырӑ сунакан вут-кӑвар. Вӗсем ԏӑваш йалӗсене, ԏӑваш ҫӗр ԏавалакансене, ԏӑваш тырӑ-анисене курса иртеҫҫӗ. Мӗн шухӑшлаԏԏӗҫши вӗсем ԏӑвашсене курсан? Мӗн шухӑшланӑши каттӑрка ҫуран кайакан, сӑнԏӑрпа пӑвӑнса, конвой аллинԏе выԓӑх вырӑнӗнԏе пыракан М. Ф. Достовский?... Вӑл та ԏӑваш ҫӗршывӗ урлӑ иртнӗ теҫҫӗ... Ытти нумай писаттӗлсем, револютсионерсем, патшана йуратман улпутсем, интеллекентсем, хура халӑхран та тухнӑ пӑлхавӑрҫӑсем ҫав ҫулпах иртнӗ теҫҫӗ.

Л. Н. Толстой „ӳкӗнекенӗ“ халӑх ӗҫӗшӗн кӑна мар, пуринԏен ытла хӑй ԏунне тасатас, хӑйне валли ҫӗ-

нĕ пурăнăç йĕрки йышăнас тесе, çав асаплă çул çине пуснă. Вăл хăй сăнҫăрне, хăйне пăвакан ҫуралăх пăйавне сирпĕтсе, ывăтса хăйне ирĕке кăларас тесе, çав çул çине тухнă. Çапах та çак çÿлти си хушшинҫе паларпă сулăнăç историллĕ ĕç пулнă... Вăл та кивĕ йĕрке пĕтессине, çĕнĕ йĕрке çуралса аталанассине пĕлтернĕ... Çак керой Çипире кайаҭ, унта асап курса пур ĕлĕкрен тунă—вараланнă асапран тасалма кайаҭ. Унăн вăл пăсса асапа хăварнă хĕрĕ тĕрмере выртмалла пулаҭ. Çак тĕрме хуралçи ҫăваш пулаҭ. Сăнас пулаҭ—увăн йулташĕ Ҫулхула вырăсĕ пулаҭ. Тĕксĕм, сарлака питлĕ хĕсĕк куçлă ҫăваш салтакĕ... Мен хушнине тăвакан ҫура, пусмăрпа ҫунлăхне çухатнă тунката. Кама вăл хуралланине ăна мĕне кирлĕ пулнă пĕлсе тăма? Вырăссен куҫттурă пур, вĕсен çивҫĕ тăнлă, хĕрÿ кăмăллă интеллекентси пур... çав куҫттурă тĕттĕмлĕхĕпе виличҫен кĕрешет. Анҫах вăл пур те ҫăваша йут. Ун çинҫен ăна пĕлме те тивĕçлĕ мар. Çак сăн ҫăваш историйĕн нумай ĕмĕрсем вăрăмĕш самачине сăнлаҭ. Вăл пирĕн ҫуралăха сăнпитлет. Вăл ҫăваш халăхĕ пирĕн ĕмĕр пуçламăшĕнҫе йепле пурăнвине, вырăс куҫттурĕн, тĕнҫе куҫттурĕн карги умĕнҫе çеç аташнă выҫăх пек хĕсĕнсе тăнине кăтартаҭ.

Çак тĕлĕшĕпе Н. Г. Гарин çырса хăварнă „Сарпике» пĕтĕмпех хăйне уйрăм вырăн йышăнса тăраҭ. Ҫи малтан çак калава автор йури ҫăвашсем çинҫен

çеç çырнӑ. Унтан ӑна Раççейри çыруçӑсен хушшинҫе клаççик вырӑнӗнҫе хисепленекен ҫаллӑ писаттӗл çырнӑ. Унтан тата çав калав ҫӑваш халӑхӗн историллӗ саманине, вӑл ӗмӗрхи ыйхӑран вӑранса çӗнӗ çул çине тухма тапӑннине кӑтартать. «Сарпике» илемӗпе ытарма çук ҫипер калав. Хӑйӗн ӑшҫикӗпе, унӑн никӗсне хунӑ шухӑш тымарӗсемпе те вӑл ҫӑвашсемшӗн питӗ сӑнама тивӗçлӗ калав. Мӗн йенҫен ӑна сӑнаса пӗлме тивӗçлӗ?

Анҫах малалла ун çинҫен калиҫҫен ҫи малтан Н. Г. Гарин кам пулнине, вӑл мӗлле майпа ҫӑваш халӑхӗ çинҫен çак калава çырма шухӑш тума пултарнине пӗлес пулать.

Вӑл 1852-мӗш çулта нарӑсӑн 8-мӗшӗнҫе Питӗрте çуралнӑ. Çамрӑк ҫухне вӑл Огессӑра пурӑнса иртернӗ. Çитӗнсен вӑл ҫукун çулсем хывакан иншенере вӗренсе тухнӑ. 30 çула çитсен вӑл Самар кӗпӗрнинҫе Кунттуровкӑ йатлӑ имени туйаннӑ. Çав имени Пӑкӑрӑслан уйесӗнҫе пулнӑ. Çак 80-мӗш çулсен пуçламӑшӗнҫе пулнӑ. Вӑл имениййе хресҫен халӑхне çӗнӗ хуçалӑх йӗркине кӑтартас, çав çӗнӗ йӗркене йышӑнтарас тесе туйавнӑ. Именире вӑл виçӗ çул тӑрӑшӗпе питӗ тарӑшса ӗçлесе пурӑннӑ: ӑна нумай уйлӑ тунӑ, хаклӑ тырпулсем: мӑкӑҫ, хӗвелçавӑрӑнӑш акма тытӑннӑ, унтан вӑл питӗ нумай йасмӑк акса усӑ курнӑ. Унтан 90-мӗш çулсенҫе вӑл темиçе урӑх именисене тара илсе унта та çуллӑ техниккӑллӑ тырӑсем акса, унтан пӑрçа, йасмӑк,

ытти ҫавӑн пек лӗпӗшҫеҫеклӗ тырӑсем акса усӑ курнӑ. Ҫав ӗҫпе вӑл хресҫен халӑхне ҫӗнӗ хуҫалӑх йӗркипе йепле усӑ курассине кӑтартасшӑн кӑна кӗрмешнӗ. Ҫак вӑхӑтра вӑл ун именисенҫе ӗҫлекен ҫӑваш патракӗсемпе, ҫӑваш тарҫисемпе паллашнӑ пулас. Унтан 80-мӗш ҫулсен вӗҫӗнҫе вӑл Ӗпхӳрен Слаттоуста кайакан ҫукун ҫула хывнӑ ҫух ҫав ӗҫӗн пуҫлӑхӗ пулнӑ, ҫак ҫула 1890-мӗш ҫулта туса пӗтернӗ. Ҫак ҫула тунӑ ҫух вӑл ҫӑваш халӑхӗпе лайӑх паллашнӑ: Урал тӑвӗ тапранса кайнӑ ҫӗрсенҫе ҫӑвашсем те пурӑнаҫҫӗ, пӗр тӗлте ҫул тӳрех ҫӑваш йалӗ (Купӑвӑ) ҫумӗнҫен иртсе кайаҕ, унта «Ҫӑваш» йатлӑ ставси—расйест та пур, ун йатне те ҫав Н. Г. Гарин хунӑ пулас. Унтан 1891-мӗш ҫулта вӑл Хусан ҫемстви хушнипе Хусантан Малӑша каймалли ҫул туратне йӗрлесе унӑн плавне туса панӑ. 1898-мӗш ҫулта вӑл сирӗплӗ шыв йалӗ Серкиева ҫул тураҫӗ хывса пӗтернӗ. Ҫак ӗҫсене тунӑ ҫух, вӑл йалалах ҫӑвашсене тӗлпулкаланӑ. Вӑл 1906-мӗш ҫулта ҫӳкӗн 27-мӗшӗнҫе вилнӗ. «Сарпикене» хӑҫан вӑл ҫырса хӑварни паллӑ мар. Вӑл унӑн пур ҫырнӑ йапалисене пиҫетленӗ ҫух 1916-мӗш ҫулта пиҫетленнӗ—ӑна вырӑсла вулас пулсан «Нивӑ» йатлӑ шурнал кӑларакан Маркс пиҫетлевӗ Н. Г. Гарин кӗнекисен VП-мӗш томне тупас пулаҕ. Ҫыракан Сарпикене вырӑсла «Зора» тенӗ—ӑна вӑл «сарӑ», «сарӑ хӗр» тенӗ сӑмаха вырӑсла ку-

çарса калана, ҫаваш каҫҫине вăл «Зораим» тенĕ, ăна вăл «сар аҫа» тенĕ сăмаха куçарса каланă пулас.

«Сарпике» кĕске такмак, унăн хайласа çырнă сÿрети те витĕр паллă, ăнлама çăмăл. Çак калавра мĕн çинҫен хайласа такмаклаҭ пирĕн çыруçă?

Тулли хапрăк-савăтлă Анкли хули. Тинĕс пристăнĕ. Çамрăк ившепер айакри йут çĕре ҫукун çулсем хывма, акăш-макăш çуртсем, хапрăк-савăтсем тума, машшинăсем леçме кайма пуçтарăннă. Вăл ҫăваш çĕрне килме пуçтарăннă. Мĕн тума килесшĕн вăл? Вăл пирĕн тĕттĕм çĕршывра куҭттурăпа техникă тапратма, промышлĕнăç акса ÿстерме шухăш тунă. Анкли—тĕнҫери империалисăмăн тĕп шăтăрнакĕ. Вăл çĕр ҫăмăрне пĕтĕмпех пур йенҫен те хăйĕн влаçĕпе, капитал влаçĕпе куҭттурăпа техникă хăваҫĕпе кăшăллана. Пĕтĕм тĕнҫе ун аллинҫе, ун ҫăмăрĕнҫе хĕсĕннĕ колоҫи. Америккă, Африккă, Австрали çĕрĕсене, Инти, Киттай çĕрĕсене, оккеан хушшинҫе çуха.лнă утăсене—пур тĕле те Анкли сынписем саланаççĕ—вĕсем ăслăлăхпа, пĕлÿпе, куҭттурлă йăласемпе, хисепсĕр нумай мулпа авăрланнă. Кам, мĕн вĕсене хирĕç тăма пултараҭ? Çавсенҫен пĕри ҫăваш халăхĕ патне, ҫăваш çĕршывне килме пуçтарăннă. Вăл ҫăвашсен хушшинҫе промышлĕнăç, куҭттурă, техникă тапратас тет. Вăл кунта ҫăнахах та килет. Хăйпе пĕрле вăл Раççейрен Анклире тарса пурăннă пĕр таркăн матроса илсе килет—çак матрус унăн тăлмаҫĕ

нулат. Пулма пултарнă-и çак йапала? Халлап кăна мар-ши вара вăл? Çак ĕç пулнах. XIX-мĕш ĕмĕрĕн вĕçĕнҫе ҫăваш çĕршывĕнҫе тĕрлĕ тĕлте ҫукун çулсем хывăннă: Мускавран Самара, Ёпхĕве, Çĕпĕре, Мускăвран Хусана, унтан çав çулсенҫен тĕрлĕ кĕске туратсем-йупсем (Инсăран Ҫĕмпĕре) хывăннă. Çак ĕçе кăпиталисăм тĕнҫен пĕрлешнĕ капитталĕ тунă. Çак ĕçре тĕнҫе техникки, ăслăлăхĕ ĕсленĕ. Ҫукун çул хывакансен хушшинҫе нумай йут иншенерсем ĕçленĕ. Çавăнпа Карри йумах мĕлки çеç теме йурамаст—вăл ҫăнтан ҫăн пулнă етем сăнĕ теме кирлĕ. Тăлмаҫ çинҫен те вăл халлап кĕлетки çеç теме йурамаст: салтаксемпе матроссен хушшинҫе ытти патшалăхсене тарса ўкнĕ емикрантсем ĕлĕкренех пулкаланă, çавăн пек емикрантсем ҫăвашсенҫен те пулкаланă. Вĕсен хушшинҫе ҫăвашла пĕлекен вырăссем те пулкаланă. Малалла кăтартнă Карри ĕçĕсем те пире пĕртте иккĕлентермелле мар. Ҫăнах та 90-мĕш çулсенҫе пирĕн çĕршыв палламалла мар улăшăнса кайнă: ăна паровоссен сасси йанăрата пуçланă, çав ҫукун çула пула ҫăваш тавринҫе пĕҫĕкçĕ те пулин хапрăксемпе савăтсем курăна пуçланă. Ку сахалха: 10—15 çул та иртмен—çав ҫукун çулсене пула ҫăваш пурăнăçĕ пĕтĕмпех урăх айак çине çавăрăнса ўкнĕ: ҫăваш халăхĕ туса кăларнă çăмарта, ҫăх-ҫĕпĕ, хур-кăвакал, çĕтĕк-çурăк, хăмла, йуман кҫепки, ҫăпта Анкли çĕрне кайса тăра пуçланă. Сисĕнмен те—киреметçĕ ҫă-

вашсем Лонтонра сутилӳ кантурӗ уçнӑ (Селиван хуçа). Анкли пуçхулинҫе ҫӑваш сути ӳçисемпе ҫӑваш прикашҫӗкӗсем çӳре пуçлавӑ. Европпӑра салтак пӑлхавӗпе нехекрен-мӗнтен çыхланнӑ емикрант çеç мар—ҫӑнтан револҫутсиллӗ кӗрешӳçӗсем—ҫӑвашсем палӑраççӗ (Алҫун Кевӗрли, Йӑкӑнат Çитӑрӗ, Прохор Трахвинӗ ыт. те). Унтан Европпа ҫӑвашсем вӗренме кайма тытӑнаççӗ: С. А. Акимов Париҫре, Т. З. Горбунов Женевӑра, Кукӑлҫ Итталире вӗренеççӗ. Такмакӑн тӗп тӗвви—йуратнӑсавнӑ историйӗ пӗлтерет. Çак ҫӗре вӑйи-çыххи такмака вӗри ҫун кӳртсе вут кӑвар пек хӗрӳлентерсе çунтарса тӑрат҄. Çак тӗлӗшӗпе пирӗн такмак ҫӑваш литтератtурӗнҫе çӑлтӑр пек çутӑ поемӑ «Нарспи» патнех çывӑхарат҄. Анҫах каллех çакӑ та суйа халлап сӗмлепӗвӗ çеç мар-ши? Кун çинҫен каллех калас та мар: кам ҫӑваш хӗрӗ акӑлҫан çамрӑкне куç хывса çунгарса типӗтессине шанмаст҄—çав етем ҫӗрин тургӑмӗсене—сулӑвӑçӗсене пӗлмест пулат҄. Ҫӗре, йурату-саву, мӑшӑр шыракан ҫун вимӗне те пӑхмаст҄—хӑй тӑвас течине тӑватех. Акӑлҫан иншенерӗшӗн—ҫӑваш хӗрӗ акапуç тивмен çеçенхир ҫеҫекӗ, çурхи кӑҫӑкӑ папки, ҫӑваш хӗрӗшӗн акӑлҫан каҫҫи—пӗлӳпе ӑсталӑхпа куçпуçа тӗнҫене пӑхӑвтаран йекӗт. Мӗншӗн вӗсен пӗр пӗрне савса йуратас мар?

Карри хӑй шухӑшне, хӑй ӗмӗтленнӗ ӗмӗтне çийеле кӑлараймаст҄—вӑл хӑй ӗçӗшӗн хӑй пуçне хурат҄.

ђукун çул ĕçлекен ђăвашсем пăлхав кăлараççĕ: Карри гарçисем вĕсене йўн хакпа ĕçлеттерсе, улталаса, штрафсем туса аптăратнă, вĕсен çĕрĕсене каса-каса илсе йăлăхтарнă, хĕрĕсене, арăмĕсене мăшкăласа вĕсен кăмăлĕсене тавăрнă... Карри хăй те ђăваш хĕрне Сарпикене ђĕре серепине çыхлантарса вăрласа тыткăна илнĕ... Кам курмасĭ, сисмест, кунта колонисенђе империалисăм тăвакан политтиккăн ђаршавĕ пĕр кĕтесрен те пулин йар усăлса кайаĭ. Н. Г. Гарин—сотсиал темократ, маркçист пулнă, çавăнпа унăн калавĕ питĕ тарăн шухăшлă. Вăл çак ĕç хушшинђе, выђакаласа çеç тĕрлесе пăрахнă калавра та пирĕн саманари тĕп проплемăна, тĕп ыйтăва сăнласа кăтартса парaĭ. Çав ыйту—хĕвелтухăçĕнђи халăхсем хĕвеланăç куђттурне йышăнасси, хĕвеланăçĕнђи куђттурлă халăхсен пусмăрĕпе кĕрешесси, çав пусмăра хăйсен ĕнси çинђен сирпĕтсе куђттурлă пурăнăç тилкепине хăйсен аллине илессине пĕлтерет. Çак шухăш калавра питĕ витĕр йе тĕплĕ палăрмасĭ, çапах та вăл сисĕнет. Çак шухăш çав саманара питĕ тĕплĕ палăрма та пултарайман,—мĕншĕн тесен, ун ђухне ђăваш халăхĕ ыйхăран вăранса çитеймен, капиттализăм хуравне кĕрсе пиçсе тухайман, çавăнпа унăн классlă натсионаллă сулăнăççем, турпăмсем, итеолоки ђăнтан тĕреклĕленсе çитеймен. Ăна револютсилĕ тăн кĕрсе çитеймен çапах та калавра Карри Сарађăм çĕççипе ђикĕнĕнсе вилет. Вăл мĕне пĕлтерет? Вăл

кайăк-ҫакак пек пурăнакан ҫăваш ҫĕринҫе те вăйхăват пуррине, вăл та хăйпĕн хăй тăма пултарнине, империалисăм пусмăрне, йут куҫттурă пусмăрне сирсе ывăтма пултарнине пĕлтерет... Карри ҫунне Сарпикене парса, йурату мăйкăҫĕпе пăвăнса вилет... Карри ҫунĕпе ҫăвашсен патĕнҫе тыткăна лекнĕ тет. Ҫак калав шăпҫăк йурри пек илемлĕ. Ҫеҫонхир ҫеҫекĕ пек кăмăллă. Вăл кĕрхи кун пĕлĕтре вĕҫекен ерешмевкарти пек ҫăмăл. Вăл ҫунатлă калав.

Астăватра—уйар каҫ ҫурăмпуҫ ҫулĕ пĕлĕте касса йарăлса выртаҭ. Унăн вĕҫĕ ҫук, пуҫĕ ҫук.. Ҫав ҫулпа акăш, кайăкхур, тăрна шереписем какаласа иртеҫҫĕ. Вĕсем пире шухăшласа илме ҫук айакка вĕҫсе кайма йыхăрса иртеҫҫĕ... Ҫак калавра та ҫăваш халăхне тĕнҫен аслă ҫăлтăрлă ҫулĕ ҫине ҫĕннĕ сасă илтĕнет. Ҫав ҫул—куҫттурă, техникă, ăслăлăх илемĕн ҫулĕ пулаҭ.

Н. Г. Гарин ҫăваш халăхне, унăн ĕненĕвĕсене, мифолокине ҫăнтан пĕлмен. Ҫавăнпа вăл кăтартнă карттинăсем хăшĕ ҫăнтан ҫăваш карттинĕсем пек те туйăнмаҫҫĕ. Анҫах унщăн ҫыракана кăшт та пулин сăлтăклама та епир пултараймастăпăр. Вăл вăхăтра вырăс ҫыруҫисем ҫăваш халăхĕ ҫинҫен темĕн те суйса, хурласа ҫеҫ ҫырпă. Н. Г. Гарин ҫăваш халăхне сахал пĕлнĕ пулсан та, унăн тĕп историлĕ тĕллевне, унăн историллĕ ҫулăн аслă пăрăнăҫне систерсе панă. Вăл ҫăваш халăхĕ те тĕнҫе ҫине тухса етемйышĕ карти-

шӗнҫе тивӗҫлӗ вырӑн йышӑнассине систерсе пыӑ... Ҫакӑншӑн ӑна тав, ҫакӑншӑн ӑна витсе тӑракан тӑпра ҫӑмӑл пултӑр тесе, епир ҫувпа сунатпӑр.

Такмака ҫунатланса вулама, тӗплесе пӗлме, хӗрӳленсе выҫама ҫамрӑксене сулатӑп. Ҫӑваш ҫамрӑкӗсем! Сараҫӑмсем хӑвӑртрах Каррисем пулса тӑрӑр. Сарпикене вӑрманра йур ҫинҫе шанса вилесси вырӑнне куҫпӑван керменсем тӑвӑр. Йӗрӗх, ийе, йумҫӑ сӑнӗсене сирсе пӑрахса Аполлон, Венерӑ кӗлеткисемпе пурӑнӑҫа илемлетӗр. Ҫӳкпуҫсене пӑрса ырӑтса пурӑнӑҫ хуҫисем хӑвӑр: малатук тытакан ӗҫлекенсем, акапуҫне пӑркалакан хресҫенсем, ҫӑваш иншенерсем, техниксем, агрономсем, тухтӑрсем, поетсем, ҫыруҫӑсем, артистсем, композиттӑрсем есир хӑвӑр пулӑр... Ҫак вӑхӑт ҫитет, ҫитсе ӗнтӗ вӑл. Вӑл пирӗн пурӑнӑҫӑн алӑк пусми ҫинҫе тӑрать...

*Йуман М.*

# ПРОЛОК[1]).

Акӑлђансен аслӑ хулин тинӗс пристӑнӗ Тинӗс хумӗсем шавлаҫҫӗ Айаккарах хапрӑксемпе савӑтсен ӑрйисем[2]), пӑрахутсем курӑнаҫҫӗ. Пристӑнђ ҫине кайакансемпе вӗсене ӑсатакансем кӗпӗрленнӗ.

## Тинӗспе ҫӳрекенсен йурри.

Кам макӑрас, типӗ тытас тет—
  Мӑнастыре кайтӑр;
Кам ӑшӑпа канлӗхшӗн пӑшӑрханаӗ—
  Хӑй пӳртӗнђен ан тухтӑр;
Кам та кам кӗрешме хавас—
  Пирӗнпе оккеан ҫине кайтӑр.
Унта вилӗм пек хӑрушлӑха тӳрех кусран пӑхма—
  Епир ӑна вӗрентӗпӗр,
Вӑкӑра мӑйракаран ҫавӑрса илме—
  Епир ӑна хӑнӑхтарӑпӑр...

---

1) Пролок—малтан калани, сӑмах уммӗн, сӑмах пуҫӗнђе калани. Ҫапла театӑрсенђе выђӑнакан трамӑсен малтанхи уйрӑмӗ пайне калаҫҫӗ, вӑл трамӑра кӑтартнӑ ӗҫрен пайтах малтан пулнӑ, унтан мӗн пулассине пӗлтерекен йапалана систерет.

2) Урӑхла трупасем, трубы.

**Ай хай-хай! Ай хай-хай! Пирĕн кăмăл, пирĕн вăй-хăват ĕмĕҫĕ—**

**Оккеан, вĕҫĕмсĕр ирĕклĕх, кĕрешӳ...**

**Кам пирĕнпе пырас тет—пыр!**

*(Каррипе унăн йăмăкĕ Мери пĕр хĕррине пăрăнса уҫăлса ҫӳреҫҫĕ).*

**Мери.** Ҫапла ĕнтĕ, ҫунăм тăванăм Карри, тата нумай та мар минутран есĕ пире пăрахса таҫта айакка ҫиҫйута кайатăн. *(Кăшт тъĕнмессĕр тăрса, унăн куҫĕнтъен тишкерсе пăхат).* Тен ес тата та мана мĕн те пулин калатăн пулĕха?

**Карри.** Есĕ мана йепле те пулин Маркаритта ҫинҫен каласҫтарасшăн ĕнтĕ. Тăванăм, манăн сире вăрах вăхăта пăрахса кайас минутсем ҫитрĕҫ, ҫавăнпа ĕлĕк каламанвине каламасăр тӳсме пултараймастăп. Маркаритта питех ман кăмăла кайат. Унран пуҫне никампа та епĕ вăхăта пĕр сисĕнми, ҫăмăл иртерме пултараймастăп. Вăл аҫа пек ҫамрăк пулсан та, манăн пысăк йывăр шухăшсене ман пуҫран сирсе йарат. Епĕ хам та лайăх куратăп—епĕ те унăн камăлне кайатăп. Анҫах ҫапах та... пăхха ун ҫине—йепле вăл пирĕн туссен, тантăшсен хушшинҫе пĕр шухăшсăр шуххланат. Пĕр куҫхывса мăшăр пулассине ҫунпа ҫуйланă ҫын ҫапла пулма пултарайат-и вара? Хама та илес: епĕ халĕ ун ҫинҫен ҫеҫ шухăшлатăп, анҫах паразхут ҫинҫе урăх кăмăллă хĕре тĕлпулсан, епĕ ҫав урăх савни ҫинҫен шухăшлама

тытӑнмӑп-ши вара? Пирӗн хушшӑмӑрта етемсене ӗмӗрне пӗр пӗринпе мӑшӑрлӑ ҫыхса хуракан ӡӗре туртӑмӗ ҫитӗнейменха. Малашне вӑл пулӗ те-и тен... Анӡах малашне мӗн пулассине малашнехи вӑхӑт хӑй пӗлтӗр...

**Мери** *(йывӑррӑн сывласа илет)*. Вӑл сана йуратаҭ, Карри; унтан лайӑхрах мӑшӑр епӗ сан ваӡӡи шухӑшласа та тупас ҫук.

**Маркаритта** *(васкаварлӑ утса пырат)*. Карри, епӗ сирӗн йӑмӑкӑрпа калаҫса илес тетӗп. *(Карри тайӑлат те пӗр хӗррине пӑрӑнат)*.

**Маркаритта** Савнӑ тусӑм Мери, ман пуҫра кенийалла [1]) план пур. Каррийӗн лере ҫӗнӗ вырӑнта пурӑнас керменӗ [2]) ҫитес ҫула ҫеҫ хатӗр пулаҭ. Ман атте Каррийе ҫав ҫитес ҫӗнӗ ҫула хисеп туса праҫниклеме ун патне хӑнана пыратӑп терӗ. Тусӑм Мери! йепле есир те унта каймасӑр йулӑр, йепле есир ҫав айакри ҫула хӑвӑрӑн тусӑмӑра [3]) пӗрле илсе каймасса пултарӑр? Вӑл сире ҫав тери йуратаҭ, вӑл сире айакри ҫула пӗӡӡен кӑларса йама

[1]) Кени— ӑсхакӑлпа, ӡун хӑваӡӗпе вӑтам ҫыпсенӡен хисепсӗр нумай ҫӑлте тӑракан етем, кунта кенийаллӑ тени питӗ ӡейе ӑспа хайласа йышӑннӑ плана пӗлтерет.

[2]) Дворец, тӗлӗнмелле лайӑх ҫурт, ҫавӑн пек ҫуртсем ӗлӗк патшасен, аслӑ улпутсен, аслӑ капиталҫӑсен пулнӑ. Кермен тесе авалхи ӡӑвашсем крепӑҫсене каланӑ, кунта замок тенӗ ҫурта, пӗӡӡен уйрӑм ларакан ҫурта, сыхшӑн етем кӗмелле мар хӑме—картапа карталаннӑ ҫурта пӗлтерет.

[3]) Хӑй ҫинӡен систерсе калаҭ.

хăрат... Анҫах Карри нимĕн те ан пĕлтĕр. Ман кăмăлпа вăл маскарат [1]) тутăр. Вара епĕ унта хама маскăпа пытарса ун урлă ҫеҫ пурне те курăп, маскарат пĕтсен, сан пӳлĕмне кайса пытанăп. Кайалла таврăннă ҫух, пысăк шлепке айне куҫ-пуҫа пытарса паллаштармасăр сан камеристкă [2]) пек пулса санпа пĕрле таврăнăп. Ҫапла тума есĕ те килĕшĕн-ши?

**Мери** (*кăмăлсăр*). Савнă тусăм Маркаритта, тин сисрĕм: ак мĕн ҫинҫен есир халĕ питĕ вĕриленсе калаҫса илтĕр!

**Маркаритта.** Ҫавҫке, ҫавҫке... Куратра йепле унта пур те вăрвар ҫаврăнаҫҫĕ: ҫав ман акĕнтсем [3]) аттепе Каррийе маскарат тума ӳкĕтлеҫҫĕ. Йĕҫе таҫакан атакка[4]) кайма вăхăт ҫитрĕ: ать епир те вĕсене кайса пулăшар. (*Шухăша йерсе пыракан Осваҫта*). Пырăр Карри патне, пĕр вăхăта унăп кăмăлне ҫĕклесе-пусарса тăрăр.

---

[1]) Маскарат -етемсем пит ҫине маскăсем тăхăнса выҫакан вăйă, маскă тесе урăх сăн-пит пултăр тесе пит ҫине тăхăнакан йапалана калаҫҫĕ; ҫĭвашсем Раштав уйавĕнҫе шуйттан вăйине выҫани маскарат йĕверлĕ пулвă.

[2]) Камеристка—камера тенĕ сăмахран пулнă, камерă—пӳлĕм, камеристкă тесе улпутсемпе пуршуасен хĕрĕсене тирпейлесе пăхса пурăнакан хĕри-пăраҫа калаҫҫĕ, вăл пӳлĕм хĕрипăраҫĕ тенине пĕлтерет.

[3]) Акент—урăх ҫын хушнине тăвакан.

[4]) Атаккă тесе вăрҫăра тăшман ҫине мĕн вăй ҫитнĕ таран кĕпĕрленсе пырса кĕрешнине калаҫҫĕ.

ку кирлĕ, ку манăн пуçпа пурăнăç хакне тăрат, çавăнпа кайăсăрђĕ хăвăртрах (*Мерипе иртсе кайат*).

**Освалђт** (*Маркаритта йенелле пăхса*). Кайам çав. Сана пĕр ĕмĕтленнĕ ĕмĕт çитессине шанмасăр йуратсан та, сан кăмăлă хыççăн çеç çӳреме епĕ вĕреннĕ. (*Карри патне пырса йна аллинђен ыталаса тытат*). Çапла ĕнтĕ çапах та есир кайма турăр. Çав айакри халăхăн тусĕсем[1]) пире ылханни сана ђарайкмасă пулат: вĕсен шухăшĕпе пирĕн кулђтурă вĕсен халăхне телей мар, асап çеç кӳме пултарат.

**Карри.** Ех, ан кала та! Пирĕн пурăнăçăн саккунĕсем пĕтĕм тĕнђене йĕркелесе тăракан саккунсем етем ĕçĕпе—вăйĕн хакне пăрахăça кăларса рынокпа[2]) сутилӳ кăмăлĕсене çеç тултарса тăрассиве пĕлтереççĕ. Çав йĕркене итеалистсем[3]) улăштарас тесе тăрăшни сайа кайса çеç пырат. Çакă пурăнăç ăслăлăхĕ, çакă вăл вĕрентекен аслă ăслăлăх, вăл кăтартакан аслă саккунсем, савнă тантăшăм Освалђт. Епĕ хам та ырă уттоппистђĕ[4]), епĕ

---

1) Айакри халăх ђăваш халăхне пĕлтерет. Халăх тусĕсем — империалисăма хирĕç пусмăрлă халăхăн натсионаллă ирĕклĕхĕшĕн кĕрешекен револђутсионерсем (ђăваш револђутсионерсене пĕлтерет).

2) Рынок—сутилӳ тăвакан вырăн, кунта Карри пирĕн пĕтĕм пурăнăç çав рынок йеверлĕ тет.

3) Итейа—шухăш, ите л—пуçпа шухăшласа кăларнă ырă та илемлĕ те хайла, итеалист-хăй шу ăшĕпе, хăй кăмăлĕпе, хăй вăйĕпе пурăнăçа пĕтĕмпе çавăрса улăштарас тийекен етем.

4) Утопи-нихăçан пулман, пурăнăçра шăнăçми йапалана кăтартакан хайла. утопист çаван пек хайла хыççăн кăмăлне çӳретекен етем.

етемсене телей ахалех пӗлӗт ҫинꚋен ишӗлсе анассине шанаттӑм. Анꚋах малашне те ҫав пурӑнӑҫа таса ӗмӗтсен светтуй шывӗпе сирпӗтсе йӑпанассинꚋен халӗ манӑн кӑмӑл таврӑнꚋӗ. Есӗ мана асап ҫине кайатӑн тийӗн. Асаплану мӗн вӑл?.. Акӑ Нансен [1]) асапланнине илер: вӑл икӗ ҫул тарӑшшӗпе поꚋус ҫинꚋе пурӑннӑ, вӑл икӗ ҫул тӑрӑшшӗпе пӗрте ҫӑвӑнман, пылꚋӑкра путса пурӑннӑ, вӑл унта пӗртте хӗвел курӑнман вӗҫӗмсӗр вӑрӑм каҫсенꚋе шӑнса, вилме, шыва путса вилме пултарнӑ: ӑна унӑн тӑвӑр та, ӑшӑх та киммине хайар моршӑсем [2]) йӑвантарса йарса путарма пултарнӑ. Ҫав ҫынсем Нанҫӗнран ыйтса пӑхꚋӑр—телей-и вӑл, йе асап-и? Савнӑ тантӑшӑм Осваꚋт, пирӗн телей хамӑр тӑнпуҫпа ӑсхакӑлра ҫеҫ: вӗсем кӑва етемсене ҫӗр ҫинꚋи райа [3]) кӳртеҫҫӗ. Хамӑр пуҫ ҫине хамӑр ирӗкпе аслӑ шӑпа [4]) илни ҫеҫ пирӗн тӑва ыйхӑран вӑратать—епир тивӗҫлӗрен ҫавӑн пек ӗҫе ҫеҫ йуратмалла.

---

[1]) Нансен—ꚋаплӑ ҫулҫӳревҫӗ, вӑл ӗмӗрне ҫӗр ꚋӑмӑрӗ тӑрӑх тӗплесе пӗлсе ҫӳрет, вӑл пуринꚋен ытла етем ури пусман сивӗ ҫӗрсене тӗплесе пӗлнӗ, вӑл халӗ те сыв: хӑрушӑ выҫлӑх вӑхӑтӗнꚋе вӑл ытти патшалӑхсенꚋе пирӗн ваꚋꚋи пулӑшу пухса тӑꚋӗ, вӑл тӗнꚋере ꚋи паллӑ ӑслӑлӑхҫӑ, вӑл Европпӑра йалан Капаш Раҫҫейӗн хутне кӗрсе кӗрешсе пурӑнать.

[2]) Морш—сивӗ оккеанра пурӑнакан ꚋӗрꚋун.

[3]) Рай—сӑвапллӑ вырӑн, кунта вӑл пирӗн ꚋи лайӑх пурӑнӑҫа пӗлтерет.

[4]) Шӑпа тесе кунта епир хамӑр ирӗкпе хамӑр сӑнаса-суйласа йышӑнма пултарнӑ ӗҫ ҫинꚋен йуптарса каланӑ.

*(Пăрахут çинтре шăнкăрав шăнкăртатса илет. Кайакансемпе ăсатакансем сывпуллашса уйăрăлаççĕ. Пĕрисем пăрахут çине лараççĕ, теприсем пристăнь çинтре йулаççĕ. Карри те ăсатакансентрен уйăрăлса кайма хатĕрленет).*

**Маркаритта ашшĕ** *(Каррийе ыталаса илсе)*. Сыв пулăр, пирĕн тусăмăр. Есир çамрăк, хăватлă кăмăллă, хастарлă. Мулпа пĕлӳ сирĕн аллăрта; есир çав айакри çере [1]) алăра хисепсĕр пысăк влаçпа пысăк вăй-хăват тытса кайатăр; есир пĕтĕм тĕнрене култтурăпа пăхăнтарнă патшалăх краштăнĕ [2]). Ĕçлĕр ĕнтĕ вăй пур рухне.

**Карри**. Ах, çапла пултăр! Ман тевис [3]) çакă пултăр: „пĕлӳ, есĕ йулхавсене ыйхăран вăрат!“ *(Трап [4]) çине улăхат).*

**Маркаритта** *(йеррипен)*. Атте, есĕ те, есир те, тантăшсем, мĕн ĕçлетĕр есир? Вăл кайаîçке ĕнтĕ... *(Карри тарăнат).*

**Маркаритта ашшĕ**. Çапла ĕнтĕ есир пире çĕнĕ çула пĕтĕм хатĕрпе кĕтсе тăратăр?

**Карри**. Çапла, çапла!

---

[1]) Раççейри рăваш çĕршывне пĕлтерет.

[2]) Анкли çыннине пĕлтерсе калат.

[3]) Тевис тени тума ĕмĕтленсе пикеннĕ ĕçе пĕлтерекен тĕп шухăш пулат.

[4]) Трап карап çине улăхмалли йе анмалли пусма, рикмек.

**Маркаритта ашшĕ.** Йепле шанас çак ҫасах пулассине... Апла пулсан сан ĕçу çийеле тухнипе [1]) пĕрле хаваславса ĕçкĕ-çикĕ тăватпăр пулаť. Çакăнтан мĕн лайăххи пур? Анҫах ҫăнтан савăнас пулсан, пирĕн çав çĕнĕ çул маскаратне тирпейлĕрех те, ҫаплăрах та тумалла мар-ши?

**Карри** *(савăнăçлă)*. Апла пикесене [2]) те ҫĕнес пулаť-и?

**Маркаритта ашшĕ** *(иккĕленнĕ пек пулса)*. Пĕлейместĕп...

**Карри** *(сăнав [3]) кĕнекине кăларат)*. Çапла ĕнтĕ епĕ çыратăп: маскарат çак çулăн Раштав уйăхĕн 31-мĕшĕнҫе пулаť.

*(Çынсен хушшинҫен пĕр ватă [4]) хĕсĕнсе тухат, вăл тĕреклĕ, ырă, тирпейлĕ сăнпитлĕ çын, вăл пĕр тĕрлĕ кăна тумланнă).*

**Ватă** *(Каррийе)*. Ырă çыннăм, сире пĕр сăмах калама йурĕ-ши?

**Карри** *(васкаса ун патне анат те ăшă кăмăлпа калат)*. Мĕн ырă тума пултарăп-ши епĕ?

---

[1]) Ĕç çийеле тухасси ҫăваш тавринҫе Карри тума ĕмĕтленнĕ ĕçсем: ҫукун çул хывасси, хапрăксем тăвасси, творетсă тăвасси пулса тăрассине пĕлтерет.

[2]) Пике—вырăсла дама.

[3]) Сăнав кĕнеки—записная книжка.

[4]) Ватă—старик.

**Ватӑ** Епӗ есир кайакан ҫӗршывӑн ҫӗлхипе халӑх [1]) йӑлисене лайӑх пӗлетӗп; епӗ сире унта йертсе ҫӳресе пулӑшма пултарӑттӑм.

**Карри.** Сирӗн ӑсталӑхӑр [2]).

**Ватӑ** (*тертленсе калама тытӑнат*). Манӑн сире пурне те тӗрӗсрен каласа пама кирлӗ...

**Карри.** Епӗ итлетӗп, анҫах сӑмаха вӑрӑма тасмасӑр калӑр—пӑрахут кӗтмест.

**Ватӑ.** Епӗ ҫав ҫӗрте [3]) ӗлӗк матросра пурӑнтӑм, турӑ пӗлет—епӗ слушпӑра тирпейлӗ ҫынҫӗ, анҫах ҫапах та мана тӗк тӑна ҫӗртенех хурлӑхлӑ турӗҫ... Епӗ ӑна тӳсеймерӗм...

**Карри** (*хавасланса*). Ку аван.

**Ватӑ.** ...те тарса кайрӑм [4]). Халӗ епӗ сирӗн ҫӗршывӑн враштӑнӗ, анҫах мана ҫун хам ҫуралнӑ ҫӗршывалла, хам ҫамрӑк ҫух пурӑннӑ вырӑнсен йенелле пӗр тӳсме ҫук туртса тӑрат.

**Карри.** Анҫах унта сана палласа пӗлмӗҫ-ши?

**Ватӑ.** Ӗлӗк йалан хавасла [5]) пулнӑ ҫамрӑка кам халӗ вӑл ҫак ватӑ ҫынах тийӗ?

**Карри** (*шӳт туса*). Мӗншӗн те пулин ҫиленсе, епӗ сана тытса парсан?

---

[1]) Ҫӑваш ҫӗлхипе йӑлисене.
[2]) Асталӑх—кунта специальность.
[3]) Раҫҫейре.
[4]) Теҫертирлерӗм—дезертировал.
[5]) Веселый.

**Ватӑ** (*пуҫне суллаҫа*). Есир мана пӗлмесен те, епӗ сирӗ пӗлетӗп: есир аҫаранах ман кантӑк уммӗнҫе шкула иртсе сӳренӗ ҫухнех, епӗ сире сӑнаса ҫитерне... Епӗ астӑватӑп—йепле есир пӗрре ҫын хутне кӗрсе вӗриленсе...

**Карри**. Ҫитӗ старик.

**Ватӑ**. Ҫук, ырӑ ҫыннӑм, есир мана тыттарас ҫук, ун тӗлӗшӗнҫен епӗ пӗрте шикленместӗп. (*Карри шухӑша йерет*).

**Маркаритта** (*Мерийе пӑшӑлтатса калат*). Йепле вӑл ҫав тӗрлӗ кӑмӑллӑ ватӑ ҫын. Вӑл Каррипе пӗрле кайтӑрахҫӗ.

**Карри** (*старике*). Иккӗн пӗрле кайӑпӑр.

**Мери**. Карри, Маркаритта сана старике хупа пӗрле илме кӑмӑл тӑвать.

**Карри**. Апла пулсан, епӗ тата та савӑнарах хампа илсе кайатӑп.

**Ватӑ**. Тав сире. Анҫах камха ман хута кӗрсе, манӑн кунта сӑмах хушрӗ, ман ӑна пӗлесҫӗ, пӗлсен епӗ уншӑн кӗлтӑваттӑм.

**Мери** (*Маркаритта ҫине кӑтартса*). Акӑ...

**Ватӑ**. Ах, ҫакӑн пек хӗршӗн кӗлтума манӑн кӑмӑл йаланах ҫӗкленсе тӑрӗ, вӑл мана тиркемесен мана ун аллине тытса ҫӑмӑртама телей пулмӗ-ши?

**Маркаритта** (*хаваслanса*). Акӑ мейӗр!

**Карри** (*Маркаритта*). Çак ватă çине пăхсанах, эпĕ малашне сире аса илĕп.

**Маркаритта** (*старике хăвăрттăн туптуса илсе*) Çапла ĕнтĕ хăвăр улпутăра [1]) йалапах мана асăнтарма тăрăшăр.

(*Йулашки шăнкăрав*)

**Карри**. Утар, старик, вăхăт çитрĕ.

**Мери** (*пĕр йенелле пăхса*). Тата кăшт тăнă пулсан тен вĕсем сăмаха татса çыхăннă пулĕççĕç [2]) (*йывăррăн сывласа илет. Карри пăрахут çинче тăрат*). Карри, тен епĕ те сан маскарат праçникне пырăпха.

(*Пăрахут тапранса кайат. Матруссем хăйсен йуррине йурлаççĕ. Ăсатакансем сывпуллашмалли сассисем илтĕнеççĕ*).

**Маркаритта** (*Мери йенелле çавăрăнса*). Ах, Мери, Мери, мĕнгĕрлĕ епĕ ăна йуратататăп Ун çине кăна пăх —унăн сăнĕнче мĕн чухлĕ кăмăллă тирпей [3]).

---

[1]) Господин.

[2]) Договорились-бы (Каррипе Маркаритта çинчен).

[3]) Благородство.

# Пěрремěш тăвăнăç [1]).

## 1-мěш карттин [2]).

*Айакри йал, шывçырми, пěви. Хěвеллě кун. Йěритавра йешěл, йе тěрлě тьетьек тумланнă уйсем. Ђăваш тумне тумланнă хěрсемпе катьтьăсем. Хěрсем вăйă калаççě. [3]), катьтьăсем пěр хěррин тье пухăнса тăраççě. Сарпике [4]); унăн ватă ашшě, çав йалти тьӳкпуç [5]); унăн çураçнă катьтьи [6]) Саратьăм [7]).*

**Ђӳкпуç.** Хавасланăр, аӡамсем, хавасланăр, ырă турă-пӳлěхçě пире савăнма уйав пиллесе панă, ăна та ӡыслама пěлмеççě тесе, айăп ан тутăр ěнтě вăл: ах хавасланăрсем, аӡамсем, хавасланăр!

**Вăйă.** Ěçӡен ěçлет савăнса,
Ђунне йăпатать киленсе,
Айлар-айлар, ай-хай-ђум,
Ђунне йăпатать киленсе.
Вăйă çинӡе маттур пулсан,
Ěçре хурлă пулас çук,
Айлар-айлар, ах-хай-ђум,

---

[1]) Действие, акт.
[2]) Тěс, сăн, кěлетке.
[3]) Хор, хěрсемпе каӡӡăсем алăпа-алă тытса каљђě-маљђě çавăрăнса йурланине пěлтерет.
[4]) Çыракан ăна вырăсла Зоря тет.
[5]) Ђӳкпуç—жрец.
[6]) жених.
[7]) Çыракан Зорани тесе ӡěнет.

Ĕçре хурлă пулас çук.
Ĕçре сулхăн пулакан,
Ташра йулхав пулнă тет,
Айлар-айлар, ай-хай-ђум,
Ташра йулхав пулнă тет.

*(Цĕр катђђă таша йарат—ђăркуççине кукăрлата кукăрлата ташлат).*

**Ђўкпуç.** Савăнăр, ађамсем, савăнăр. Савăнăр асласăрсен-аславнĕрсен авалхи йăлипе. Анђах çак уйав савăнăçĕвђе ан манăр çуратан[1]) çĕр амăшне. Çак ама-пўлĕхе çўлти турă йун выђатакан уйав уйăхне пиллесе панă *(хăй куçне ђейс хĕсе выђатса илет)*. Сулхăн ан пул, Сарађăм, тен есĕ хăвăн савнă йурруна йурласа илетĕн пулĕ?

**Вăйă.** Ай-хай çав, ай-хай çав,
Епир те йурă итлĕпĕр!

**Сарађăм.** Еппин мĕн тутасене хупса тăрасси пур: Йурлам çав.

Çĕр çинђе çуралнă ђĕрĕ ђун
Йурлаť ђĕре савнине.
Çапла турă çырнă пулĕ.
Вăл çырниниђен иртеймĕн.
Пўлĕх-пиллĕх перекеђĕпе
Çĕр ђавалап, тырă акап.
Хĕвел пăхаť, пăс пăсланаť,

Çурхи кунпа çурхи ир...
Кĕтӳ йаранаҫ хирелле.
Ака пăру мĕкĕрег,
Амине ҫĕнет тарăхса,
Ака вĕçен кайăксем
Савни çинҫен йурлаççĕ.
Маттур тантăш Сарпике
Ашшĕ килне таврăнҫĕ,
Манăн ҫĕрем сикет-тапаҫ—
Ах, йуратап еп ăна!
Сана савăп-йуратăп—
Ҫĕрем сурăлса кайиҫҫен.

**Вăйă.** Ай-хай маттур, каҫҫă маттур,
Айлар-айлар ай-хай ђум!

**Ђӳкпуç.** Мĕн калĕ-ши ĕнтĕ пире вунçиҫҫе çитнĕ Сарпике?

**Сарпике.** Сарпике вимĕн те ҫĕнеймест. Сарпике тĕлленмесĕр çывăраҫ. Атте-анне аҫашлани йапăхтармĕ ĕмĕрне. Пĕве хĕрринҫи килçуртăмра ҫунăма канĕç пĕтĕмпех. Çак пурăнăç тивлеҫĕ кăмăла выђатма ҫараҫçке Хăçан та хăçан епĕ йапăхăп—Сараҫăма кăҫăк туртăп [1]).

**Ђӳкпуç.** Апла, ывăлăм Сараҫăм, тата тепĕр çул кĕтен пулĕ?

**Сарпике.** Унҫен, тантăшăм Сараҫăм, манăн тусăм пулăн есĕ.

[1]) Ҫĕнĕп, йыхăрăп.

**Сарађăм.** Сан туса кăна пулассине епĕ хапсăнманђĕ. Анђах мĕн тăвас ĕнтĕ? Кĕтес пулĕ ҫав. Ах Сарпике, Сарпике, епĕ санăн тусу, санăн ђи шанђăклă тусу.

**Ђўкпуҫ.** Ак аван, ак аван. Апла пулсан мĕн вăхăта пирĕн ахађ калаҫса иртересси пур?..

*(Сисмен ҫĕртен Каррипе унăн ватă йулташĕ пырса пĕр хĕррине тăраҫҫĕ)*

**Вăйă.** Ĕҫђен ĕҫлет савăнса,
Ђунне йăпатаť киленсе
Айлар-айлар, ай-хай-ђум (*малалла та ҫавăн пек*).

*(Пĕр катђи кађђех ташша йарат).*

**Карри** (*малалла тухса*). Калăр-ха, ырă ҫынсем, мĕншĕн есир ытти етемсем пек ака акалас вырăнне кунта таш ташлаттăр?

**Ђўкпуҫ.** Пирĕн халĕ уйав, аслă турă хушнипе епир ăна савăнса уйавлатпăр.

**Карри.** Аслă турă?

**Ђўкпуҫ.** Вара ҫав, пирĕн турăмăр.

**Карри.** Киреметҫĕсем...[1]) Кућттурăн ђи ҫўлти пусми ҫинђе тăракан халăх патĕнђен килсе ђи айалти пусма ҫинђе тăракан халăх патне ҫитрĕм. Анђах йепле есир хађиђђенех тĕрĕс-тĕкел сыхланса йулнă. Йепле, ăҫтан есир хăвăр туррăр ҫинђен пĕлтĕр?

---

[1]) Язычники

**Ҫӳкпуҫ.** Епир, мӗскӗн ҫӑвашсем, ҫырӑва пӗлмесен те, аваліран аттесем каланине асран ҫухатмасӑр, ҫӑваш йӑлисене тытса-туса пурӑнатпӑр. Ҫӳлти турӑ—пирӗн аслӑ турӑ, ырӑ турӑ, пирӗн йӗрӗх ҫеҫ кӑмӑлсӑр хӑватӑ, вӑл ҫеҫ етем ҫине куҫ ҫирӗ ӳкерет. Ырӑ турӑн ҫамрӑк ырӑ хӗрӗ пур, вӑл пире туйсем тума пулӑшат. Ҫапла пурӑнатпӑр ӗнтӗ епир. Епир ҫулталӑк тӑрӑшшӗпе ӗҫ ӗҫлетпӗр, ҫӗр ҫавалатпӑр, ҫу уйӑхӗнҫе уйавра ҫеҫ епир ӗҫе пӑрахса ҫуна савӑнтаратпӑр. Епир турра хисеплесе йуратпӑр, епир турӑ амӑшне, ҫӗр амӑшне хисеплетпӗр. Епир унӑн сассине сӑнаса итлесе пурӑнатпӑр: вӑл кӑтартнипе епир хӑш тырӑ пуласине, хӑшӗ пулмассине ҫухлатпӑр, ҫапла ҫухласа пулас тырра ҫеҫ акатпӑр. Пире пӑхса ытти халӑхсем те ҫав пулас тырӑсене ҫеҫ акаҫҫӗ. Епир никама та сийен тумастпӑр. Епир ӗҫленӗ ҫух хавасланса ӗҫлетпӗр, савӑннӑ ҫух ҫунатланса савӑнатпӑр, вилӗм килсен епир вилетпӗр, вара пирӗн вилӗм ҫинҫе пуминккере [1]) ытти ҫынсем пире сavӑнса асӑнаҫҫӗ. Халӗ ӗнтӗ пӗлтӗн кулӗ мӗскӗн ҫӑвашсем йепле пурӑннине. Кӑмӑлу пулсан—епир хамӑр йурӑмӑрсене те йурласа пама пултаратпӑр.

**Карри.** Йуррӑра итлесе пӑхасҫӗ ҫав, старик.

*(Хӗрсем йеррипен сӑмахсӑр ӗнӗрешсе йурлаҫҫӗ Карри шухӑша кайса пӑхса тӑрат).*

---

[1]) Вилнӗ ҫынна асӑнни, поминки.

**Карри.** Кам пĕлет, ман мăнасаттем те çакăнтах айакран килнĕ хăна вырăнĕнҫе тăнă пулĕ, ăна та хисеплесе çаплах йурă йурласа панă пулĕ. Мĕншĕн ман ҫĕре вĕриленсе сике пуçларĕ-ши? Халĕ мана куçапăван [1]) каратăрана [2]) сирсе йарса хам аҫа ҫухнехи сăпка [3]) умĕнҫе хамах тăнă пек туйăнать... *(Пĕр тĕнмесĕр пĕр хĕрринерех пăхса тăрать. Хĕрсем сасăпа хытăрах кĕвĕлеççĕ, вĕсем алтивĕççĕн йĕритавра çавăрнаççĕ, вĕсем йеррипен пĕр-ик пусăмран пĕрре тăрăнса çавăрнаççĕ).* Вĕсем мĕне асăнса йурлаççĕ?

**Ҫӳкпуç.** Вĕсем халĕ пĕр сăмах каламасăр йурлаççĕ. Вĕсем кĕвĕре вилсен леш тĕнҫере турă умне йепле пырса тăрассине кăтартса параççĕ. Ун ҫухне вĕсем тӳрех турă куçĕнҫен пăхса тăрĕç. Вĕсем унҫух ҫĕлхесĕр пулĕç. Турра сăмах-тавраш кирлех те мар—вăл ахаҫ те пурне те пĕлет. Ех, çылăхлăçке çав, етем тени! Унăн пысăк çылăхне нихăçан та сăмахпа çеç çырлахтарас çук.

**Карри.** Мĕн тĕрлĕ тирпейлĕ, хăватлă, илемлĕ çак сăвă-кĕвĕ! Унтан нумай вĕçсе иртнĕ ĕмĕрсен техĕмлĕ шăрши [4]) сисĕнет. Куçа хупласа тăракан ҫаршав йар сирĕлҫĕ, пĕлӳсен тĕпсĕр авăрне [5]) путнă тăнпуç шăп-

[1]) Волшебный.
[2]) Занавеска, ҫаршав.
[3]) Колыбель, зыбка.
[4]) Аромат промчавшихся веков.
[5]) Бездна знаний.

пăрт пулђĕ, кăкăрти ђĕре кăна йăл-йалт сике пуçларĕ— вăл пурăнăçăн ирхи çутти йенне тапа пуçларĕ. Ах ку хĕр! Йепле вăл ытарма çук илемлĕ! Çак çамрăк, ађа пек çамрăк пит-куç çинђи хайар çар етемин пуç тумĕ [1]) мĕнле килĕшетçке! Çав тимĕр-хурçă пек йăлтăр-татакан тум айĕнђен питçăмартисем тата йĕпкĕн хĕрелерех курăнса тăраççĕ. Мĕнле вăй, мĕнле вут-кăвар çунса тăрать!... Тӳрех каснă-лартнă весталккă [2]) куçĕ. Есĕ кам, старик?

**Ђӳкпуçĕ.** Епĕ ђӳкпуçĕ. Сана пирĕн хăна пулма сунатăп.

**Карри** (*савăнăçлă*). Епĕ ăна хавас. Йепле ватă ђун çамрăк ђуна туртса илештересшĕн тăрăшать, çавăн пекех мана, ман ђĕреме халăхсем ђăмăртанма çеç пуçланă самана, халăхсем ађа сăпкинђе çеç ађашланнă самана ытармалла мар туртса тăрать.

**Ватă** (*шăппăн карийе*). Есир ĕçлекенсене ĕçе пĕтерме, унтан сире кĕтсе тăма хушсаттăр пулать.

**Карри.** Çĕрçăттăр ĕç тавраш не! Есир çав хĕре куратра (*Сарпике çине кăтартать*). Вăртăн ыйтса пĕлĕр: кам вăл, хăш кил-çуртран, унăн ашшĕ-амăшĕ кам?

**Ватă** (*сулхăнланса*). Еппин хамăр кайас уммĕн...

---

[1]) Тухйасемпе хушпусене пĕлтерет.

[2]) Авалхи халăхсен турăсене парне кӳрекен вырăнти вуђаха сыхласа тăракан хĕр, вăл пурăнăçне турăсене çеç парăнса пурăнакан хĕр; таса, ĕмĕрлĕхне хăй хĕрлĕхне сухатман хĕр вырăнне хисепленнĕ.

**Карри** (*тӳсеймесӗр васкаса сӑмаха пӳлсе*). Ҫитӗ, ҫитӗ...

*(Ватӑ аллисене шарт ҫапать те кӑмӑлсӑрланса етемсен хушшине кӗрсе кайса ҫухалать. Кӗвӗ тъарӑнать, вӑйӑ хӗрӗсем алӑран алӑ тытса ҫурма-ҫаврӑнӑҫлӑ [1]) хирӗҫ пӑхса тӑраҫҫӗ).*

**Карри.** Калама ҫук аван, тӗлӗнетӗп (*ытараймасӑр Сарпике ҫине хӗрӳлӗ шӑтарас пек пӑхать*).

**Ђӳкпуҫ.** Халӗ ӗнтӗ ес те кала: кам ес, ӑҫтан ес?

**Карри.** Кам еп? Кам-ши еп? Итлӗр еппин, тусӑмсем, кам еп: хӑҫан та хӑҫан аслӑ турӑ ҫӗре ҫуратса тунӑ, вӑл ҫӗрпе пӗрле хӗвеле, уйӑха, ҫӑлтӑрсене те тунӑ. Ҫапла пысӑк тӗнђене тытса тӑма ӑна пӗђђен пӗр пуҫа йывӑр пулнӑ. Вара вӑл хӗвел ҫине, уйӑх ҫине, ҫӑлтӑрсем ҫине, ҫӗр ҫине пӗрер сывлӑш туса йанӑ, ҫав сывлӑшсем тӗнђене тытса тӑма ӑна пулӑшмалла пулнӑ. Ҫав ҫӗр сывлӑшне-хӑватне вӑл хисепсӗр нумай мул туйантарнӑ, ҫав мула вӑл етемсене пиллесе панӑ. Анђах ҫӗр сывлӑшӗ турра улталанӑ: пур пурлӑх-пуйанлӑха вӑл ҫӳлӗ ту ҫине ҫын куҫӗ курман кӗлете, куҫпӑван кермене [2]) кайса пытарнӑ. Хӑватлӑ сывлӑш усал кӑмӑллӑ: ҫав мулран етемсене вӑл нимӗн те ахађ памасҭ. Ҫав мула етемсенђен питӗ пысӑк хак-сӗтев илсен ҫеҫ парать: сӗтев вырӑнне вӑл пирӗн сывлӑха, ҫамрӑк кун-

[1]) Пол-оборота.
[2]) Волшебный замок.

сене, пурӑнӑҫа илет, пире асап-сапа туйантарать. Ҫав мул патне етемсем ҫапах та хӑҫан та пулин ҫывӑхарӗҫ, ӑна тупӗҫ, усал сывлӑша ҫӗр ҫинҫен пуҫиле хӑваласа йарӗҫ [1]...

**Ҫӳкпуҫ** (*ҫиленсе сулхӑнланса*). Мӗн тумалла ун мулӗпе—капла та епир пурӑнатпӑр...

**Карри.** Ҫав мулпа мӗн тӑвас? Пӗтӗм пурӑнӑҫ вӑйӗ, сӗткенӗ, техӗмӗ ҫавӑнта. Халӗ есир ҫӗрҫен, тир-ҫӗрлӗ, выҫлӑхран, сивӗрен, асапран хӑраса пурӑнатӑр.. Унҫухне выҫлӑх, сивӗ, асап-сапа сирӗншӗн телейе ҫавӑрӑнса кайӗ.

**Ҫӳкпуҫ.** Есӗ сывлӑш турӑран хӑрамасть тен пулать?

**Карри.** Турӑ айакра, ҫавӑнпа ӗмӗтсӗр канӗҫсӗр сывлӑш мӗн тӑвас тенине тӑвать.

**Ҫӳкпуҫпе вӑйӑ** (*хорпа*). Йӗрӗх пулӗ вӑл, пур пытарнӑ мул ун аллинҫе пулӗ вӑл.

**Карри.** Ахҫке ҫав: усал пӑтраттакан сывлӑш вӑл. Мӑнкӑмӑллӑ сывлӑш. Пурне те пӑхӑнтаракан сывлӑш. Кама вӑл куҫ хывать—ҫавӑ ӗмӗрне ун хыҫӗнҫен йерсе ҫӳрет, ун мулне ҫӗрипе-ҫунӗпе хапсӑнса ҫӳрет, анҫах усал сывлӑша ҫав ҫын тата та ытла курайми пулать. Ман ҫуна тыткӑна илҫӗ вӑл: телей те мана, хуйхӑ та мана—епӗ унӑн ҫури. Анҫах унӑн вӑй-хӑваҫӗ те ман ӑшра: кама епӗ пырса тӗртӗнетӗп—ҫавӑ ман хыҫҫӑн пырӗ...

---

[1] Карри мул тесе ӑслӑлӑх, культурӑ, техниккӑ, илемӗш ҫинҫен хайласа систерсе калать.

**Ђўкпуçĕ** Акă кам иккен ес? Ес—йĕрĕх хыпарçийыхравçи[1]). Ех, хуйхă пире!. Авал калани тĕрĕсленђĕ. Пирĕн ватă ахаљ каласа хăвармарĕ тĕр çав: вăл каларĕ—йывăр самана, ахăр самана килĕ, туpă хăй ирĕкне пĕтĕмпех йĕрĕх аллине парĕ...

**Карри**. Мĕншĕн хăйусăрлантăр, хăрарăр есир? Еп сире усал сунса илсе килмен: еп сире лайăх килçуртсем туса парăп, сирĕн ђунăрти выљăх-ђĕрлĕх канăçлăхне çивђĕ тăнпуç телейĕпе улăштарса парăп...

**Ђўкпуç** (*тљăркуçланса ларат*). Ах, хĕрхенсем пире!

**Карри** (*хавассăн*). Хĕрхенме вырăн çук сире, тăванăмсем. Тăр, старик, тăр!

**Ђўкпуç** (*йăвăрăн ура çине тăрат*). Парăнатпăр епир сана.

**Вăйă** (*хорпа*). Парăнатпăр епир сана.

**Карри** (*пĕр хĕррине пуçа çавăрса*). Мĕскĕн ђурасем, ђасах малашне апла пулмăр есир.

**Ватă** (*Каррийе пырса пăшăлтатса*). Сарпике йатлă вăл, вăл кўл хĕрринђе пурăнаť, çак старик ун ашшĕ (*тљўкпуç çине кăтартат*). Анђах манăн сире аса илтерес пулĕ...

**Карри**. Çитĕ, калама терте ан хыв.
(*Ђўкпуçне*) Ак йенђĕке куратни? Есĕ кăмăл тусан, епĕ ăна хĕрсене парас тетĕп.

**Ђўкпуç**. Сан ирĕкў.

---

[1]) Вестник, пирĕшти.

**Карри** (*Сарпике патне çывăхарса*). Ытарма çук ђипер ађам, сан пит куçăнтан пăхса сана ђуптуса, епĕ пур çак пур хĕрсене те тавтăватăп.

(*Ђуптăват ăна, алли тупанне укçа хурат. Сарпике вăтанса тăрат. Саратђăм вĕриленсе çĕкленсе васкаварлă пырса тăрат*).

**Карри** (*мăшкăлçăлă*). Çапла ĕнтĕ пирĕн йăламăр: хĕрсене епир ытти çынсевђеп ыйтмасăрах ђуптăватпăр.

**Ђўкпуç**. Çапла вĕсен йăли пулаť, çавăнпа унпа килĕшес пулаť.

(*Саратђăм пуçне усса пăрахса кайат*).

**Карри** (*пĕр хĕррипелле йĕрĕнĕçлĕ калат*). Ђурасем—кирек хăçан та ђурасемех çав. (*Хытă сасăпа*) Халĕ ĕнтĕ еп сире пăрахса кайам, тăванăмсем. Каçпа мана канма йăва кирлĕ пулĕ: старик, епĕ санран мана килĕнте çĕркаçма пама ыйтасшăн.

**Ђўкпуçĕ**. Сан ирĕкў. Хаклă хăна пулăн... Хĕрсем, есир хăнана парне панăшăн тав тăвăр.

(*Хĕрсем вăйă çавракăшне татса çурма-çавракаллă*[1]) *тăрса тайăлса тавтăваççĕ. Мусăк турра кими*[2]) *кĕвĕлесе выђат*).

**Карри**. Мĕн тĕрлĕ ђипер! Ах, мĕнле унăн куçĕ выђаť...

(*Ђаршав*).

---

[1]) Полукругом.
[2]) Гимн.

## 2-мӗш карттин.

### 1-мӗш куранни[1]).

*(Пӗве кӳлӗ, натҫар пӳрт, пӳрт умне ларма тӑпра купаланӑ, хӗвел анать. Сарпике, ун амӑшӗ картҫӑк, Сарӑтҫӑм.*

**Карҫӑк.** Сасартӑках мӗн пулҫӗ-ши пирӗн Сарпикене? Пуҫӗ вӗри, ӳтпӗвӗ пӗҫерет, мана та палламасть. Ах, йӗрӗх! ах, хайар инкек-синкек! аҫана уйав кунӗ те шеллемесӗр персе ӳкерҫӗ.

**Сараҫӑм.** Вӑл сасартӑк шухӑша кайса, ӑнран кайса ларҫӗ те, тантӑшӗсем вӑйӑра выҫанине, вӗсем ӑна ҫӗннине пӗлми пулҫӗ. Вӑл пӗр ҫӗнми пулса, хӑй умне ҫеҫ шӑтарас пек пӑхса ларҫӗ. Вара ашшӗ хушнипе епӗ ӑна тӑратрӑм та, сан патна илсе килтӗм.

**Карҫӑк.** Ах, хӗрӗм! ах, Сарпике ҫунӑм! Ес мана илтетне, мана куратна? Ҫӗнеймест... Хӑвӑртрах йумӑҫа кайас пулать. Ҫупса кайса килха, Сараҫӑм.

**Сараҫӑм.** Ҫупамка *(тҫупса кайать)*.

*(Сарпике пӳрт ҫумӗнтҫи тӑпра ҫине йӑванать).*

**Карҫӑк.** Вырт, аҫам, вырт, ҫывӑрса кансан, ыйхӑпа йӗрӗхӗн усал куҫӗ сирӗлтӗр, усал куҫӗ тухтӑр. Еп хам каҫхи ҫимӗҫ хатӗрлем... Хӗвел ана пуҫларӗ, пирӗн хуҫа ҫасах таврӑнӗ ӗнтӗ.

**Сараҫӑм** *(калиткере куранать)*. Сана старикку сирӗн патӑра выртма хӑна килет тесе калама хушрӗ.

---

[1]) Явление.

**Карђăк.** Мĕнле хăна?

**Сарађăм.** Пĕлейместĕп. Хăраса ан ўк ес анђах: çав хăна йĕрĕх йыхравçи, вăл пире улпут çурђĕсем тăвĕ, машшинсем илсе килĕ, ђукун çулсем хывĕ теççĕ.

**Карђăк.** Темĕн калан çав ес, ăссăр, епĕ нимĕн те ăнлаймарăмçке. .

**Сарађăм.** Çапах та йурĕ еппин, старик хăй каласа парĕ, епĕ ђасрах ђупам... (*кайат*).

## 2-мĕш курăну.

**Карђăк.** Вăл йĕрĕх хыпарçийĕ темерĕç-иха? Апла пулсан, ăна пирĕн ађа çинђен усала сирме ђасрах йăлăнсан йурĕђĕ... Машшинсем илсе килĕ, улпут çурђĕсем тăвĕ... Çук, ман пуç çаврăнаť, нимĕн те ăнлаймастăп... Ак ђирлĕ ађам сывăраť... Çывăр, ађам... Кан, ађам... Апат та хатĕрлемелле тĕр. . Çапла çав—каçхи апат хатĕрлемелле... Мĕн тата? Кайса апат хатĕрлемха еп...

(*Йывăр сывласа илет, шухăша йерсе тăрат, йеррипен кайат*).

## 3-мĕш курăну.

**(Текоратси [1]) сасартăк улăшăнаť. Симĕс пĕлĕтлĕ каç, уйăх мĕлки пĕве шывĕ çинђе выђаť. Темĕнле палласа-ăнласа илме çук кĕлеткесем, мĕлкĕсем. Пўрт тăрринђе кушактăманисем лараççĕ. Сарпике пўрт çумĕнђи пăлтăрта лараť. Хĕртсурт асатте пуçне урайĕнђен кă-**

---

1) Тĕрленĕ-сăрланă пир.

ларнă, ăна ђĕрнеллĕ уратупанĕ [2]) çине хунă, вăл тĕлĕрсе Сарпике çине пăхаť. Шыври те пуçне шывран кăларнă, вăл та пуçне уратупанĕ çине хурса Сарпике çине пăхаť. Арçури йывăç тăрринђен пăхса лараť. Темĕнле те асат хуçнă кайăк-ђакаксем [3]) урисене айне хурса ларaççĕ, пур те Сарпике çине пысăк куçсене ђарса хуйхăллă пăхса ларaççĕ).

**Сарпике.** Мĕн ман çине, савнă туррăмсем, çапла хуйхăлă пăхатăр?

**Арçури.** Мĕншĕн ес, пирĕн Сарпикемĕр, ху та хуйха кайрăн? Хуйха вĕçтерме ес манпа вăрмана çухăрма-алхасма кайасшăн мар-ши? Епĕ сан патна çăмăл сикекен мулкађсене хăваласа пуçтарăп, тилĕ илсе пырса кăтартăп.

**Сарпике.** Ай кирлĕ марçке. Ах, йывăр ман ђуна!

**Шыври.** Апла тата ман патма пĕве çине ман ађа семпе выђама кил. Вĕсем уйăх çуттипе йака-таса шыв куçкĕскийĕ çинђе алхасса выђама йуратаççĕ. Сан патна шыв хĕррине тухса вĕсем вăййа та пырĕç...

**Сарпике.** Çук, пыраймăп. Ах, йывăр ман ђунăма!

**Арçури** (*йывăç тăррингђен анаť, Сарпике çумне лараť, Сарпике пуçне ун хулпуççи çине хураť*). Мĕн, Сарпикеçăм, мĕн пулђĕ сана?

**Сарпике.** Ах, пĕлейместĕп çав еп.. Ес каламăн-ши мана, шыври хăват: ес шыв çине пăхса мĕн пуласшне тĕпђеме питĕ ăста. Йумăç пăхсам мана.

---

[2]) Лапы.
[3]) Уроды-зверки.

**Шыври.** Пăхас пулĕ еппин... (*кайса шыв çине пăхать те хăйусăрланса*). Ĕç наҫар...

**Сарпике.** Наҫар?

**Шыври.** Пире ҫас пăрахса кайăн.

**Сарпике** (*тĕлĕкри пек тепĕр хут ыйтать*). Ҫас пăрахса кайăпах-ши вара?

**Шыври.** Тăван килçуртна манăн, тăван туррусене манăн.

**Сарпике.** Тăван килçурта манăп-ши, тăван туррăмсене манăп-ши?

**Шыври.** Ес кайалла та таврăнăн, анҫах ун çинҫен ес пĕлеймĕн.

**Сарпике.** Сирĕн пата кайалла таврăнăп, анҫах ун çинҫен еп пĕлеймĕп?

(*Тĕлĕкрен вăраннă ҫухнехи пек йывăррăн сывласа илет*). Аху, çав тери йывăрçке мана, йывăр, туррăмсем! Пулăшăрсам мана! Ес—шыври, ес—ăрçури, ес манăн савнă хĕртсуртăм, есир мана усал сывлăш пусмăрĕнҫен хăтарăр.

**Пур те пĕрле** (*витĕр илтĕнмелле*). Пултараймастпăр епир. (*Сарпике çине пăхса*) Сывлăш,—вĕçĕмсĕр пăлхашакан хăват. Вăл—ҫуна илекен сывлăш.

(*Сарпике ĕмĕте пĕтĕмпех татнă пек хуйхăрса хăй умне пăхса ларать*).

### 4-мӗш курӑну.

*(Ђӳкпуҫпе Карри кӗреҫҫӗ, пӳртрен карђӑк тухать, Сарпике)*

**Ђӳкпуҫ.** Мӗнле пирӗн Сарпике?

**Карђӑк.** Ху, куран, старик, нађарҫке... *(Йутран килнӗ ҫын умне ђӑркуҫланса ларать).* Ес йӗрӗх ҫунађӗ, епир сана хӑна тунӑшӑн пирӗн хӗре ђир-ђӗртен хӑтарсам!

**Карри** *(пӗр хӗрринелле пӑхса).* Ку питех аванха! *(хытӑ сасӑпа)* Тытӑнса пӑхам епин. Есир иксӗр те кайӑр пӳрте, еп ђӗнмесӗр ан килӗр килес пулсан—сире сирӗлми хуйхӑ пусӗ!

**Ђӳкпуҫпе арӑмӗ.** Сана итлӗпӗр еппин.

### 5-мӗш курӑну.

*(Вӗсен тарҫи)*

**Карри.** Пӳрте кӗрӗр *(Тарҫӑ кайать).*

**Карри** *(Сарпике патне ҫывӑхарать).* Темӗн тӗрлӗ ђипер ађам, мӗн пулђӗ сана?

**Сарпике** *(сӗтел ҫине ђавсаланса).* Хам та пӗлместӗп. Ес мана тӗртӗнтӗн те ман вӑй пӗтӗмпех кайрӗ. Епӗ тӑнран кайса нимӗн пӗлмесӗр ларатӑп. Ес ђуптуни мана вут пек ҫунтарать. Турӑсен ирӗкӗ,—ҫухалђӗ ман пуҫӑм... *(Пуҫне аллисем ҫине хурать).*

**Карри** *(ларать).* Мӗнрен хӑран ес? Еп санпа пӗрле ӗмӗр пулӑп.

**Сарпике.** Анҫах вӗҫӗмсӗр хӑватлӑ сывлӑш мана санран уйӑрӑлма хушсан,—йепле пурӑнӑп-ши вара еп?

**Карри.** Сарпике, тусӑм-ҫӗппӗм, йепле кӑна ес ҫипер! Сана пӑрахма? Ҫук, кунта нимӗнле сывлӑш та нимӗн те тӑваймӗ. Акӑ... акӑ... пӑх ҫак петӳ [1]) ҫине... унра тӗлӗнмелле ӗҫ тӑвакан хӑват пур, унпа нимӗнле сывлӑш та нимӗн те тӑваймасӳ. Ил ӑна, уҫпа пӗрле ман пӗтӗм ҫӗрене, ман сана савакан ҫунӑма ил. Ах, Сарпике, Сарпике! .. Санӑн мӑшӑру пулӑп еп...

**Сарпике.** Ес ман мӑшӑрӑм пулсан, ҫак пӗтӳ усал сывлӑш пусмӑрӗнҫен хӑтарайӗ ши вара?

**Карри.** Ҫав пӗтӳпе епир унӑн ҫаплӑ куҫпӑван килҫурҫӗ патне кайӑпӑр. Сарпике, пырӑн-и ес унта манпа?

**Сарпике** *(Куҫне-пуҫне выҫатса ун ҫӳҫне йакатат).* Ӑҫтан килтӗн ес? Мӗншӗн ман ҫунӑм саншӑн сасартӑк уҫӑлса кайрӗши? Еп сана такҫан ӗлӗк пӗлнӗ пек пултӑмҫке...

**Карри.** Вӑл савнине-йуратнине пӗлтерет, Сарпикеҫӗм!

**Сарпике.** Савнине? Ах, савасси питӗ аванҫке! Ес те мана саватӑп тетӗн?

**Карри.** Тата камшӑн, мӗншӗн еп кунта?

---

[1]) Пӗтӳ-талисман, вӑл усалтан хӑтаракан йапалӑна пӗлтерет, ҫӑвашсем ӑна тир ӑшне ҫӗлесе кӑкӑр ҫинҫе ҫакса ҫӳренӗ, талисман вырӑнне ахах пек хаклӑ йапаласем пулма пултарнӑ.

**Сарпике** *(саваӑнса)*. Маншӑн тетне ес? ***(Йӑл кулса)***. Еп халӗ халлапри патша хӗрӗ пекех пултӑм, ес ман патна айакран килтӗн...

**Карри.** Ес маншӑн патша хӗрӗ, ес манӑн патшам, ытарма ҫук ҫипер ҫӗппӗм!

**Ҫӳкпуҫ** *(шакать)*. Мӗн халпа тӑраҭши пирӗн Сарпике?

**Карри** *(хаваcсӑн)*. Вӑл сывӑ!..

*(Сарпике кулать)*.

## 6-мӗш курӑну.

*(Ҫӳкпуҫпе карҫӑк кӗреҫҫӗ)*

**Сарпике.** Еп пӗтӗмпех сывалтӑм... Ку пӗтӗве вӑл мана йалан сывӑ пулма пиллесе паҫӗ.

**Карҫӑк.** Авӑ пирӗн телей!

**Ҫӳкпуҫ.** Ак ку аван... Тавтапуҫ хӑнана... Йӗрӗхе те тав. Мӗн каласси пур? Вӑл та хӑватлӑ сывлӑш, ӑна ҫырлахтарсан, сийен пулас ҫук, епир ун аллинҫе... Халӗ ӗнтӗ апат тума та вӑхӑт. Кӗрер пӳрте савнӑ хӑнаҫӑм!

## 7-мӗш курӑну.

*(Ватӑ кӑрет)*

**Ватӑ.** Ҫук, пӳрте ан кӗрӗр, пӳрҫӗ тасамар: унта пӑрусем, сывлама ҫук шӑршӑ...

**Карҫӑк.** Мӗн питӗ хурлан-ши ӗнтӗ пирӗн пӳрте?

**Ђӳкпуç.** Епир вĕреннĕ те, вăл пире лайăхах пек туйăнаҭ.

**Карри.** Ђимха епин, старик. Ђăнах та еп кунтах йулам. Манăн Сарпике ђир-ђĕрне тата та кăшт тӳрлетмелли пур. Есир карђăкпа пӳртре апат тăвăр, Сарпикепе пире манăн тарçăм апата кунта илсе тухтăр.

**Ђӳкпуç.** Апла пулсан, çаплах пултăр еппин... Хурлăхлă та кăшт. .

**Карђăкĕ.** Хурлăхĕ тесен çитрĕ ĕнтĕ.

**Ђӳкпуç.** Ан ђĕн, карђăк, итлес пулаҭ, Сарпике кăна сывă пултăр, ăна кăна вăл ђĕрттĕрђђĕ (*старикпе карђăк кайаççĕ*).

## 8-мĕш курăну.

**Карри** (*тарçине*). Хăвăртрах лашасене кӳл: кунта епир çĕр выртмăпăр кайатпăр.

**Тарçă.** Айăп ан ту та—лашасем пĕтĕмпех ĕшеннĕ.

**Карри.** Хăвăртрах... Вĕсем ӳлĕм канĕç.

**Тарçă.** Тата хăйса каламха...

**Карри.** Калаçса ан тăр (*Тарçă кайаҭ*).

## 9-мĕш курăну.

**Карри.** Сарпике, епĕ лашасене кӳлме хушрăм?

**Сарпике.** Ăçта кайма?

**Карри.** Ах, савнă Сарпике, манăн йуратнă мăшăрăм! Упăшку патне каймасăр ăçта кайăн ĕнтĕ ес? Хамăр лата, хамăр киле кайăпăр.

**Сарпике.** Ман ватӑсем мӗн калӗҫ?

**Карри.** Пӑрахса кай вӗсене, вӗсем пире ӑнлайас ҫук. Еп вӗсене ҫыру ҫырса хӑварӑп, вулама пӗлекен тупса ӑна вӗсем вулаҫҫӑр (*ҫырат*). Ак мӗн ҫыртӑм еп: „Сарпикене мана ҫӗр патши вӑрласа кайрӗ“.

**Сарпике.** Йепле пӑрахса хӑварас-ши вӗсене?

**Карри.** Апла пӗҫҫен кайӑп-и?

**Сарпике.** Ҫук, ҫук, еп санран уйрӑлмастӑп (*Тӗттӗмленсе кас пулма тытӑнат*)

## 10-мӗш курӑну.

**Карри.** Хӑвӑртрах хатӗрлен.

**Сарпике.** Пӗр минута кӑна кӗтсем. Еп пӗр кусхуппи вӑхӑта ҫеҫ мӗнле те пулин сӑлтавпа пӳрте кӗрсе тухам, хам ватӗсемпе сывпуллашса тухам, йулашки хут кӳл ҫине, хамӑн туррӑмсем ҫине пӑхса илем.

**Карри.** Ҫук, Сарпике, ҫук. Ху ҫӗрӗне ху хускатса ан тертлентер, пӗр хамӑр йышӑннӑ плана ан пӑс кӑмӑлна тӗреклентер, Сарпике: пире малашне пуҫ хумалли пысӑк ӗҫсем кӗтеҫҫӗ... Кайар! (*ӑна ирӗклӗ-ирӗксӗр илсе кайат*).

(*Ҫаршав*).

# Иккĕмĕш тăвăнăç.

## 1-мĕш карттинă.

Аслă тĕпел [1]), ăна çапçутă çутатнă. Пысăк, куçкĕски кĕленђелĕ ђўређесем çинђе хапрăксемпе çуртсен сĕмтĕттĕмре йăлтăртатса тăракан мăрйисен мĕлкисем ўкеççĕ. Тĕттĕм витĕрех çутнă пуйĕст [2]) иртсе кайни палăрса илет. Тĕпелре нумай костўмланнă [3]) хăнасем. Мусăк тантсăсем [4]) вылђаŤ. Хыçаларах тантсăлаççĕ [5]). Маркариттă Мусă [6]) маски тумне тăхăннă, Мери те маскă тăхăнса Тианă[7]) пулнă.

**Маркариттă**. Ах, Мери! йепле телей! Епĕ сасăма пĕтĕмпех улăштартăм, çак йут халăх ђĕлхине те вĕренкелерĕм: вăл манпа калаçнă ђух, мана паллаймасăр пĕр-пĕр хула пикипе калаçаŤ тесе шухăшлаŤ (*ватă кĕрет. Вăл тĕксĕмленсе пырат*). А, пирĕн ватă!

**Ватă**. Кам ђĕнет мана?

**Маркариттă**. Пирĕн вăртăн ĕç çинђен никама та каламасса-паллăртмасса пулса сăмах паратна? Вара тин еп хам кам иккенне калăп.

**Ватă**. Сăмах паратăп сана.

---

[1]) зала, таса пўлĕм; [2]) поезд; [3]) костўм—тум, костўмланнă—тумланнă, кунта маскарат тумне тăхăннине пĕлтерет; [4]) ташăсем; [5]) ташлаççĕ; [6]) крексен илемĕшсенпе ăслăлăхсене (искусства и науки] хўтлесе пурăнакан туррисене мусăсем тенĕ; [7]) вĕсеннех уйăхпа вăрман турри, вăл кайăкçăсене пулăшаŤ тенĕ, вăл ĕмĕрне хĕрлĕхне çухатман хĕр вырăнĕнђе хĕсепленнĕ, вăл хĕрарăмсене пурне те хўтлет тенĕ.

**Маркариттӑ** (*хӑлхи ҫумне пӗшкӗнсе*). Йепле еп сан ҫинҗен пӗлтермессе тупа туса сӑмаха тытса ҫӳретӗп, ес те ҫавӑн пекех ман ҫинҗен ним те ан пӗлтер.

**Ватӑ** (*тъӗтӗресе кайса*). Ку мӗн пулҗӗ? Ӑҫтан пӗлетӗр есир? (*Маркариттӑ пӗр куҫхупийе маскине илет*).

**Ватӑ** (*савӑнса*). Ах, есир пултӑриха? Еп сирӗншӗн кӗл тунине пӗлетӗр-и? Ак маншӑн ку телейлӗ кун пулҗӗ... кунта пурӑннӑранпа пӗртен пӗр телейлӗ кун... (*йӗритавра сӗлкӗшленсе пӑхса йӑвӑрӑн сывласа илет*).

**Маркариттӑ.** Мӗн пулҗӗ сире? Мӗншӗн есир ҫав тери тӗксӗм.

**Ватӑ.** Пытармалли сӑмахшӑн пытарса, хам сӑмахӑма та вӑртӑн калам. Ҫавӑнпа ҫак хӗр кӑшт пӑрӑнсан та йурӗҗҗӗ (*Мери ҫине кӑтартать*).

**Мери.** Ах, кӗсем мӗнле вӑрттӑн ҫеҫ хӑтланасшӑн!.. Йурӗҫке, ватӑҫӑм, кайӑп (*кайать*).

**Ватӑ.** Ай, йепле йывӑр кӑмӑлӑма! Астӑвӑрха... Христоса ӗненекенсен ҫурҗӗ-и ку? Киреметҫӗсен ҫурҗӗ —йурриcенҗе те вӗсем ҫав турӑсене кӑна асӑнаҫҫӗ. Ҫак кӗлеткесем...[1]). Ку кӗлеткесем мӗнха? Аҭа хаљ лереллерех—еп сана каласа парӑп... Ав ҫав тӑкӑрлӑка [2]) иртер... (*Хытӑ тайӑлать те унта иртет, Маркариттӑ алӑк патне пырать*). *Маркариттӑ ашшӗ (Кар-*

[1]) Статуи.
[2]) Коридор.

*рийе).* Хăвăр пур ĕмĕтленнинҫен те иртертĕр есир, кăмăллă тусăм! Халлапри пек пысăк вăйпа есир пушă вырăнта пурăнăҫ тапратса йатăр.

**Карри.** Савăнатăп—есир сапăр пулсан... Тӳрех калам—кунти пурăнăҫ малалла кайнипе, вăл прокресленнипе хам та хавасланатăп. Анҫах хурланатăп—мана йăмăк сирĕн хĕрĕр кунта ҫук терĕ, унсăр пуҫне праҫник те праҫник пек мар (*йĕритавра пăхат*)

**Маркариттă ашшĕ** (*тъейепе*). Апла... шел... Ку хăнасем ăҫтан?

**Карри.** Хуларан. Еп сире вĕсемпе паллаштарап (*Хăйсен йулташĕсемпе кайаҫҫĕ. Маркариттăпа ватă кĕреҫҫĕ*).

**Маркариттă.** Ай, турăҫăм! Мĕн кăна епĕ илтмерĕм! Ун килĕнҫе илемлĕ киреметҫĕ—хĕр пытанса пурăнат. Тен вăл ăна йуратат пулĕ... Ватă ҫĕнмест, тата ыйтам ĕнтĕ унтан... Хисеплĕ ватăмҫăм, ăна курма йурамĕши?

**Ватă.** Йепле кăтартас-ши? Ҫимĕрха: мана улпут, ун патне кĕркелесе тухса, ун хыпарне пĕлех тăма хушсаҫҫĕ. Кайам та, вăл ăна хăнасем патне ҫĕнет тесе калам. Кайран мана ултавшăн айăплас пулсан, вăл сĕлкĕш ларнипе ăна шеллерĕм тесе калăп.

**Маркариттă.** Ҫапла тусан, питĕ аван.

**Ватă** (*хытă сасăпа*). Кайап еппин. (*Карри пырса ҫитет*).

**Карри** *(Маркаритта)*. Мĕн ҫинҫен калаҫрăр-ши есир ҫав ватăпа?

**Маркаритта.** Еп унтан вăл ăҫтисем тесе ыйтрăм. Тĕлĕнмелле хăйне уйрăм йевĕрлĕ старик. Ҫак ҫурт та, унăн хуҫи те ҫавăн пекех. Пĕтĕмпе хăйне уйрăм манирлĕ. Есир ҫамкăра куҫ харшинҫен ҫўлерех тутăрпа ҫыхнă, ҫавăн пек тум мĕне пĕлтерет?

**Карри.** Ман тум-и? Ăслăлăха сăнпитлес [1]) терĕм еп. Ăслăлăх тумĕ питĕ йапăх, ҫара: куҫа хуплакан ҫыхха татса ывăт та, малалла пĕр суйа хайлапа [2]) аташмасăр пăхса пыр... Сирĕн тумăр мĕне пĕлтерет?

**Маркаритта.** Епĕ илемĕш кĕлетки пулас тесе тумлантăм. Ман тум мусăсене сăнлаҫ. Илемĕше йышăнатăна ес?

**Карри.** Илемĕш—вăл вырăнлă пултăр, анҫах ҫуна йапăхтарса тăвăрлатакан мораҫ [3]) таврашне епĕ йышăнмасăп... Илемĕшре пĕри пĕр пек тăсăклаҫ пулсан, тепри урăх тĕрлĕ тăсăклама пултараҫ. Апла пулсан, илемĕш тавлашулă пулса кайаҫ. Илемĕш вĕҫĕмсĕр ĕмĕрлĕ! Ак илемĕш! *(Венерăпа [4]) Аполлон [5]) пўсҫĕсене [6]) кăтартат).*

---

1) Изобразить.

2) Утопия.

3) Тирпейе вĕрентни.

4) Римсен илемлĕх, йурату, мăшăрлану турри.

5) Крексен хĕвел турри, вăл илемĕшсене хўтлесе тăраҫ тенĕ.

6) Алăсăр, урасăр пуҫпа кăкăра ҫеҫ сăнлакан кĕлетке, хĕрарăмăн кăкăр таврашĕн станĕ.

**Маркариттă.** Ўттир илемĕшне çеç йышăнасшăн ес?

**Карри.** Тĕнђе, çутçанталăк, пурăнăç илемĕшне... Вăл çеç вĕçĕмсĕр ĕмĕрлĕ. Ак сасартăк сывлăшран çимĕç хатĕрлемелли аппарат туса хурĕç те, пирĕн самана ра етемсем хырăмшăн асапланни—çунни манăнсах кайĕ... Çав çутçанталăк хăйех кунĕн-çĕрĕн пĕр ђарăнми хăй тĕррине тĕрлет çав тĕрĕ ĕмĕр кивĕ те, ĕмĕр çĕнĕ те,— вăл—йурату тĕрри пулаĭ... Ак çак ылттăн çиппсўрете çинђе çеç пурăнăç тĕрри тĕрленсе пыраĭ. Вăл кăна татăлтăр—пур те ишĕлсе тĕпсĕр çĕр шăтăкне ђикеленсе çухалĕ: ăслăлăх, ырăлăх [1]), илемĕш... Авалхи тĕнђе [2]) илемĕшĕ çапла пулнă... *(Илемлĕ ђăваш тумĕ тăхăннă Сарпике кĕрет)*. Йепле килсе кĕтĕн ес, ман ђĕппĕм? *(Васкаса ун патне çывăхарат)*.

**Сарпике** *(хăйусăр)*. Мана ватă есĕ ђĕнетĕн терĕ... *(Хăнасем кĕреççĕ)*.

**Карри** *(хăй ăшĕнђе)*. Мĕн аташрĕха вăл *(Сарпикене илтмелле сасăпа)*. Çапла, çапла... Епĕ ђĕвсеттĕм... Ан хăра, ђĕппĕм... Кунта пур те пирĕн туссем çеç *(Сарпикене Маркариттă патне илсе пырат)*. Епир илемĕш çинђен калаçрăмăр, киреметçĕ сан умăнта... вăл халап-йумах тĕнђинђен, мусăсен çĕршывĕнђен килнĕ...

---

[1]) Альтрунизм.

[2]) Крексен, Римђансен ытти авалхи куђттурлă халăхсен пурăнăçĕ.

вăл сире ҫунпа ҫывăх пулмалла... тен есир ăна хăвăр ҫупатăр айне хӳтлĕхе илĕр.

**Маркариттӑ.** Уншăн сиксе савăнатăп. Савнă ҫĕппĕм, епир турăшăрсене тĕрлĕ йуррăсем йурлатпăр пулсан та, епир ҫав пĕр турă аҫисемех пулатпăр. Есĕ ăна мĕнле йурăсем йурласа мухтатăн?

**Сарпике.** Пирĕн йурă пĕрехҫех...

**Маркариттӑ.** Ăна есĕ йурласа кăтартмăнши пире? *(Сарпике пуҫне ҫиксе тăрат).*

**Карри.** Тата мĕн пулҫĕ сана, ҫĕппĕм? Тен есĕ вăхăтсăр йурласа хăвăн туррусене ҫилентересшĕн мар пулĕ, ҫавăнпа йурлама кăмăл тумастăн пулĕ?

**Сарпике.** Ах, ҫукҫке! Хам турăсенҫен епĕ пĕре те шикленместĕп. Вĕсем, мĕскĕнсем, ҫак турăсем умĕнҫе мĕн тума пултараҫҫĕ?

**Карри.** Апла пулсан, мĕн пулҫĕ сана? *(Сарпикене пĕр хĕррине илсе кайат)*

**Сарпике.** Епĕ турăсенҫен шикленместĕп... ав есĕ тусăм тесе ҫĕннĕ хĕр куҫĕнҫен хăратăп...

**Маркариттӑ** *(вăрттăн ҫывăхарса, пĕр хĕррине)*. А!..

**Карри** *(Сарпикене)* Хăратăн есĕ? А пĕтӳ мĕн сан?

**Сарпике** *(савăнăҫпа)*. Ей ҫăнахах пĕтӳ пурҫке. Ҫук, ҫук, хăрамастăп та, йурлатăп та *(Хăнасем патне пыраҫҫĕ. Сарпике хăй йуррине йурлат)*

*(Хăнасем йăл кулкалаҫҫĕ, хулпуҫҫисене сиккелеттереҫҫĕ, вĕсем калаҫҫĕ темĕнле йурă ку—пĕр сăмах-*

*сăр кĕвĕ çеç вăл"*. *Карри пурин çине те сулхăн пăхса тăрат, вăл пуçне тъикет, Сарпике хăйусăрланса тъарăнат).*

**Маркариттă**. Ђипер, лайăх.

**Сайра сасăсем**. Аван, аван!

**Сарпике**. Тата йурламаллаи?

**Хăнасем** (*йерипен*). Çитет пулĕ...

(**Карри** *хурлăхланса Сарпике патне çывăхарат*). Ывăнмарăни есĕ? (*Маркаритта*) Ђипер илемĕш сана та итлесе пăхма пирĕн телей пулмĕши?

**Хăнасем**. Ах, итлесђĕ, итлесђĕ.

**Маркариттă**. Епĕ те йурлăп (*Вăл илемлĕхне ирĕклĕх çинтъен йурат, пур те тармакланса алçупаççĕ*)

**Лаккей** (*кĕрет*). Апат хатĕр.

**Карри** (*хăнасене*). Тутанма йăлăнатăп, савнă хăнасем! (*Хăнасем сĕтел* патне *иртеççĕ. Йерипен Сарпике патне пырса*) Ђунăм Сарпике, есĕ те пыратăни?

**Сарпике** (*çаплах хăйусăрланса шăппăн*). Çук, çук, епĕ пымăп... Анђах вĕсем кайсан, есĕ ман патăма пырăни?

**Карри** (*Сарпикене шăппăн*). Пырăп...

(*Маркариттă патне пырса аллине парат, иртсе кайнă тъух Сарпикене*) Каçар, ђĕппĕм (*кайаççĕ*).

**Сарпике** (*пĕтъетъен*). Вăл унпа кайрĕ... Ах, йеппле йурлат вăл! Мĕншĕн, мĕншĕн кăна епĕ йурларăмши? Епĕ те йурлама пĕлетĕп терĕм, манăн та йуррăм ђи-

пер тесе шухăшларăм... Вĕсем манран та, ман йуҫăран та мăшкăласа кулҗĕҫ... Вăл пăхса тăҗĕ, унтан кусне-пуҫне ҫĕклейми пулҗĕ... маншăн җунĕпе хурланса тăҗĕ... вăтанҗĕ пулĕп тен? *(Йывăррăн сывласа йарат)*. Ах, куллен епĕ мĕн те пулин ҫухатса ĕҫеретĕп... Тахҫанах ĕнтĕ тăвансене ҫухатрăм, туррăмсене мантăм... Тахҫанах ман җунăм сĕм тĕттĕм пулнине сисрĕм... Пайан сасăма ҫухатрăм, унпа пĕрле тен унăн савакан җĕрине те ҫухатрăми?... *(Хăравҫăлă пăхса илет, унтан савăнса)* А пĕтӳ? Ак вăл *(Ăна җуптăват)* Килмеҫҫĕн? вара... *(пытанат)*.

*(Каррине Маркариттă кĕреҫҫĕ)*

**Карри** *(Маркариттăпа стсенă [1]) хĕррине васкаса пырса)*. Калăрсам мана: мĕн пулҗĕ сире? Есир сасартăках сĕтел хушшинҗен тухрăр та, мана сире ăсатма хушрăр...

**Маркариттă.** Кам вăл Сарпике?

**Карри.** Сарпике? Мĕн майпа ăна асăнатăр есир? Сирĕн мĕн ун ҫумĕнҗе?..

*(Маркариттă маскине сирет)*

**Карри.** Маркариттă!.. Каҫарăр. *(Хăйусăр)* Халĕ тĕрĕссипе калас пулать... Тĕрĕс, Сарпикене еп саврăм, йуратрăм... Җипер, кирек хăҫан та җипер... Ман җунăмра хĕрлĕхе ҫухатман хĕрсем пек таса сăн мĕлки пиҗет-

---

[1]) Театăрта вăйă вырăнĕ, стенă хĕрри—рампа

ленҫӗ... авалхи саманасен сӑнӗ... Анҫах йепле сана ӑнлантарас? Авалхи тӗмесене ҫаваласан хӑш ҫухне вӑхӑта парӑнмасӑр сыхлаена илемлӗ йапаласене тупаҫҫӗ.. Ҫав йапала ҫипер, калама ҫук илемлӗ, анҫах ун ҫине пирӗн сывлӑш кӑшт ҫеҫ вӗртӗр—вӑл ҫерҫенскер саланса кайаӗ те, унтан нимӗн те йулмасӗ? Мӗн ӑна пӗтерет? Пирӗн сывлӑш, йе йапала хӑйпе хӑй пӗтет?.. Сарпикене 'асӑнар мар—Сарпике ҫук пултӑр. (*Маркаритта аллине парать. Маркариттӑ шухӑша йерсе унна пырать, кайаҫҫӗ*)

(*Сарпике тухать*)

**Сарпике.** Айуй, айуй! (*Пӗтӗве тытать*). Ку суйа пулҫӗ иккен! (*Пӗтӗве пӑрахать*). Ах, пӑваӗ мана... пӑваӗ мана... куҫӑм ан куртӑр... тарас пуҫиле...

(*Тухса тарать*).

(*Маркариттӑ Каррипе кайалла таврӑнать, Карри Сарпике тарнине курать*).

**Карри** (*пӗр йенелле*). Сарпике... теп илтрӗ пулҫӗ вӑл...

**Маркариттӑ.** Тӗрӗслӗхе[1]) пуҫҫапакан—есир суйатӑр. Каҫпа есир унпатне кайатӑр?

**Карри.** Есир тӳрех тӗлкӳрсе каларакр... Ҫук, ҫук, малалла та суйеҫтерес мар... Еп малтан, сире курсанах, кӑна иккӗлентӗм... Еп Сарпикене йурататӑп...

1) Истина.

*(Ђӳретђесен тулайĕнтђе шавлани, çухăрни илтĕнет, хăнасем кĕреççĕ).*

**Маркаритта** *(Освађт патне пырса ӳкет)*. Куçăм ан куртăр кун пек каçа. Мĕншĕн кăна çак маскарата хамах тапратса йатăмши? Хăвăртрах мана хам пӳлĕме усатса леçĕр те, аттене ђĕнĕр *(кайаççĕ)*.

**Карри** *(пĕтĕве тупса çĕклет)*. Ку мĕн? Апла илтрех пулаў ĕнтĕ вăл? Тата лере мĕн шавлаççĕ-ши?

**Тарçă** *(кĕрсе)*. Ђăвашсем килђĕç...

**Карри**. Мĕн ĕçпе?

**Тарçă**. Вĕсем кăшкăраççĕ, рашђут [1]) тунине хирĕç калаçаççĕ. Штрафсене те вĕсем...

**Карри**. Суйа сăлтав... Ĕлĕк çулталăкра илменнине те халĕ вĕсем ĕçлесе илеççĕ. Тата мĕн калаççĕ?

**Тарçă**. Вĕсен çĕрĕсене касса пăсрĕç...

**Карри**. Аха!

**Тарçă**. Вĕсен хĕрĕсене, арăмĕсене пусмăрласа мăшкăлаççĕ, вĕсене ирĕксĕрлесе вăрласа кайаççĕ теççĕ...

**Карри**. Ăна хăйсенђен ыйтса тунăçке.

**Тарçă**. Вĕсен кăмăлĕпе... пур те кунтан пуçиле пăрăхса каймалла... Мĕн калас вĕсем?

**Карри**. Халех епĕ вĕсене мĕн калассине калăп *(тђупса кайат)*.

*(Шăвшав хăватлăланат, Карри пăшалпа таврăнат)*.

---

[1]) Расчет.

**Карри.** Ҫӗпӗр вӗсене... *(Пӗр кӗтӳ етем кӗрет, пуҫра тъӳкпуҫ).*

**Ҫӳкпуҫ.** Санӑн емӗрне ылхавлӑ ҫуртна васкарах ес кӗтмен ҫӗртен килтӗмӗр епир *(ватӑ кӗрет).*

**Ватӑ** *(Каррийе пӑшӑлтатса).* Ҫар тапранса килет, пӗр сехетрен кувта пулаҭ,—унҫен вӗсене улталса йӑпатса калаҫса тӑрас пулаҭ.

**Карри.** Ҫар? Мӗншӗн, мӗн тума кунта ҫар? Малашне ултав пулмӗ... Ҫук! Тӗрӗссипе еп вӗсене ӑна кӑна каламӑпха. Ей, итлӗр хӑравҫӑ кайӑк-ҫунӗсем, ҫурасем! Еп пӗр шит те кайалла ҫакмастӑп, нимӗн йенҫен те сирӗн кӑмӑлра тултармаллине памастӑп! Ун вырӑнне еп сире, хайар моршӑсене, пӑшалпа кӑна кӗрӗслеттерӗп... Пӗр шеллемесӗр-ӳкӗнмесӗр хамӑн тӑнпуҫӑн пӗр тумламӗшӗн епир сирӗн пурсӑрӑн йунӑра тӑкӑп... Хам сирӗн шӑлӑр хушшине маларах лекес мӗн пулсан та ӳкӗнӗҫе йулмӑп—пурӑнӑҫӑн аслӑ саккунӗ ман майлӑ:

**Сараҫӑм** *(алӑк хыҫӗнтҫен тухса тъупса пыраҭ те Каррийе ҫурӑмӗнтҫен ҫӗҫӗпе хытӑ сулласа тъышаҭ).* Вил, ылхавлӑ тӑшман!

**Карри.** Аван ҫапрӑн *(ӳкет)*

*(Ыттисем (тъӑвашсем) тъупса кӗреҫҫӗ)*

**Тиккарсем**[1]). Тарса ҫӑлӑнӑр, кам тарма пултараҭ, усал ҫурта вут хыпрӗ! *(Шур те тараҫҫӗ)*

---

[1]) Дикари, ҫӑвашсене пӗлтерет.

**Карри** (*тăрасшăн çĕкленсе*). Тарăр, пур те тарăр! Пурăнăçăн аслă саккунĕ сире кун пек кăна хăваламĕха.

**Ватă** (*Карри патне пырса пĕшкĕнет*). Вĕлерţĕç? Ех улпутăм, ех манăн ырă хуçам!

**Карри** (*Аллисем çине тăрса йĕритавра пăхса*). Пĕтрĕ пур те. Мĕне шеллес-хĕрхенес? Мĕн çинţен кăмăла хускатса ţĕтĕретес? Еп пострa [1]) тăнă ţух вилтĕм—тепĕр хут ман кăкăра-ţĕрене вăй кĕрсен пулсан та, каţţех еп çаплах тумалла... Мансăр пуçне те ыттисем те çаплах тăвĕç. Çапах та ţĕрене темĕн хускатса ţĕпĕтет... Мана ĕнтĕ çуратан ама-çутçанталăк [2]) пĕтĕмпех ыталаса илет, унпа куçа-куçăн тĕл пултăм... Еп Сарпикепе кăна йултăм... Халĕ ĕнтĕ еп ама-çутçанталăк карталакан ылттăн сӳрете çипĕсене витĕр куратăп... Ахçке, çав! Еп ырă таса ţĕрене çурса салатрăм, хам йуратнă савнă ţуна пĕтертĕм.

**Ватă**. Ырă улпутăм! Сан пурăнăçу тата пĕртен пĕр куçхуппи çеç йулţĕ—ţасах сан умăнта ĕмĕрлĕх алăкĕ йар уçăлса кайĕ. Çӳлти Мăнтӳре сире кĕтсе тăрaӳ унта. Çĕр çинţе мĕн каласа татассине тен есир каласа пĕтермен пулĕха. Ӳкĕпĕр, каçарттарăр-çырлахтарăр вăхăт пур ţухне!

**Карри** (*тăваш çине çĕкленет*). Ĕмĕрлĕх пуçвĕçĕнţи тĕтре ман куçа хупла пуçларĕ, çапах та, çапах

---

[1]) Пост.
[2]) Мать—природа.

та еп сана куратӑп, сана саватӑп... Сарпике... ес ҫипер... маттур (*Вилсе кайса тӑсӑлса выртат*).

## 2-мӗш карттинӑ.

Хӗлле. Каҫ. Вӑрман. Йур сӑрҫӗсем, ҫӑршӑ пӑспа витӗннӗтумланнӑ. Пӗр йенҫе кӑшт ҫутӑ, темӗнле ултав сӑнсем-кӗлеткесем сӗмленеҫҫӗ. Ҫӑршӑ тураҫӗсем айала усӑнса аннӑ. Айакра ту ҫинҫе ҫунакан самӑк палӑрат. Сарпике вӑрманпа пырат.

Сарпике. Ывӑнтӑм еп—ларамха. (*Ларат*). Йепле кунта канлӗ, нимӗн те сиккелемест... Сивӗ... Хӗл... Ман ҫӗрем-ҫунӑмра та хӗл... Пур те йӗритавра ҫыварат—еп те ҫывӑрӑп... Хаваслӑ выҫакан ҫуркунне пулӗ, вӑрман ыйхӑран вӑранӗ... Кӳлӗ хӗрринҫе пӳртре атте халӑха пухӗ, ҫутӑ уйава хирӗҫ тухса илме ҫеҫенхире халӑха илсе тухӗ... Ҫук, еп урӑх нимӗн те курас ҫук... Сире пурсӑра та: атте-анне, тусӑмсем-тантӑшсем, ырӑ турӑмсем... Ах, калаҫаттӑр есир еп таврӑнӑп, хам сисмен-пӗлмен ҫӗртен пулин те таврӑнӑп тесе... Таврӑнаймӑн сирӗн патра та, таврӑнас ҫук анне патне те... кӳлӗ хӗррине пӳрте еп урӑх пырас ҫук... Айуй, йепле ман ыратат, йепле еп питӗ ывӑнтӑм, ман ҫывӑрассӑм питӗ килет... (*Ыйха кайат. Шӑппӑн*) Савап-йуратап сана...

Мӗлкӗсем сиккелеҫҫӗ, Сарпикене йӗритавра ҫавӑрса илеҫҫӗ. Вӑл йывӑҫ айӗнҫе шӑнса вилет, ҫав йывӑҫ мӗлки

пĕр куçхуппийе палăрат̆, ун çинђе шартлама [1])—асатте ларни сĕмленет. Ытти йывăçсем те çавăн пекех мĕлкĕленеççĕ; вĕсем çинђе те тĕрлĕ сăнсемпе кĕлеткесем курăнса илеççĕ. Мĕлкĕсемпе сăнсем çухалаççĕ. Сарпике ларат̆; ăна паспа йур тĕр исем витсе хупăрланă, унăн илемлĕ тумĕ çинђе уйăхăн çутă урисем [2]) выљаççĕ.

*Вĕçĕ.*

[1]) Дедушка—мороз.
[2]) Лунные лучи.

## Ђăваш Оплăçĕнђи Кĕнеке Кăларакан Уйрăмăн Шупашкарта Ађапăђа Кĕнекисем тухнă:

1. Кайăкçă Йемел—М. Сибиряка.
2. Макар тĕлĕкĕ—Короленко.
3. Кăвак Мăй—М. Сибиряка.
   Шăпђăк йурри—Андерсена.
4. Цĕђĕк паттăрсем—М. П. Петрова.
   Çўревçĕ шапа—В. Гаршина
5. Çеçпĕл (3 пайлă халлап)
6. Хуйхă. Нăрă Вађукĕ—А. Чехова.
7. Тăвата кун...—В. Гаршина.
8. Пĕр мушик пĕђђен икĕ кĕнерала тăрантарса усрани çинђен—С. Щедрина.
   Ăслă ырашпĕтри—его же.
9. Хăравçă Пађђа. Хула тулашĕнђе. Тĕттĕмлĕх пĕтерет—А. Чехова.
10. Упа çинђен.
11. Шартлама Сивĕ—Короленко.
12. Ђăваш йумахĕсем—М. Трубина.
13. Ĕçкĕ пуçа çирĕ—Семенов.
14. Ђĕлкаш—М. Горького.
15. Мĕскĕн Антун—Григорович.
16. Ђăрсăр тыха. Тĕплĕ хреçђен—А. Семенов.

---

С требованиями обращаться по адресу: гор. Чебоксары ЧАО. Чувашиздат.